Пĕр №-рĕ 10 пус — 19-мĕш çул тухать

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937 НОЙАБĔР 29 ЕРНЕКУН 273 (4785)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67; Ред. заместителĕн 0—88; Редакци секретарĕн 4—40; Дежурнăйăн 6—23

Декабĕрĕн 12-мĕшĕ—ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун

Çĕнĕ йалхуçалăх çулĕ пуçланать

Колхозлă йал суйлав кампанине хастарлăн хутшăнса суйлав кунне политикăла тата производствăла пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илет. Суйлав умĕнхи пухусенче колхозниксем рабочи класпа çирĕппĕн çыхăнса тăнине, **Ленин—Сталин** партийĕшĕн вăйне хурса ĕçленине кăтартаççĕ.

Колхозсенчи чи аван руководителсене, сталинла тырпулшăн кĕрешес ĕçре чăннипех организатор пулса ĕçлекенсене—орденоносец Короткова—Кольцовкăри Сталин йачĕпе тăракан колхоз председательне, орденоносец Краснова—„Крестьянская газета“ колхоз председательне Аслă Совет депутатне суйлама кандидата тăратнă. Çапла ĕнтĕ вăл колхозлă йалăн чи аван представителĕсене халăх шанса тăнине кăтартса парать.

Кăçалхи йалхуçалăх çулĕн аван итогĕсем, пур тĕрлĕ культурă йенĕпе те пысăк тухăç илни малашне колхозсене организаципе хуçалăх йенчен татах та çирĕплетме, колхозниксене пуйан та культурлă пурнăçпа пурăнакан пулма кирлĕ условисене пурне те туса парĕç. Йалхуçалăх умĕнче тăракан малашнехи задачăсене пурнăçа кĕртсе пырас ĕçре колхозниксен политикăла тата производствăла активлăхĕн ӳсĕмĕпе çыхăнтармала. 1938 çулта татах та вăйлă тырпул илес шутпа çĕнĕ йалхуçалăх çулне халех хатĕрленме тытăнмала.

1938 çулхи çуракине хатĕрленес ĕçре вăрлăх хатĕрлесе хурас ĕç кăçал уйрăмах пысăк вырăнта тăрать. Вăрлăха çӳп-çапсенчен, çумкурăк вăррисенчен çителĕклĕ тасатса хумала çеç мар, тĕштырăсем йенĕпе пĕтĕм вăрлăха суртлă вăрлăхпа улăштарса хумала. Ку ĕç пайан-ыранах тумаласкер. Анчах та, Чăваш Çĕрĕç халăх комиссариачĕ мĕшĕлтетсе ĕçленĕ пирки ĕç чăтма çук вăрăма кайса пырать. Республикипе кăçал 100 пин центнер таран суртлă вăрлăх улăштармала. Çĕрĕç халăх комиссариачĕ çав плана çак кунсенче çеç районсене йанă. Паллах, пайан куна пĕр центнер та улăштарса илни çук. Районсем те çак ĕç синчен манса кайнă.

Колхозсен уй-хирĕсенче республикипе кăçал пурĕ пин трактор ытла ĕçлерĕç. Чылайĕшне вĕсенчен тĕплĕ ремонт тумала. Анчах машинă-тракторлă станцисенчен республикăра пĕри те тракторсене йусама кирлĕ пек тытăнман. Тракторсене йусакан Канашри мастерскойĕнче чылай инструментсем çитмеççĕ. Çĕрĕç халăх комиссариачĕн машинă-техникă пайĕ йенчен оперативлă йертсе пыни çук. Апа кура МТС директорĕсем те лăпланса лараççĕ, икĕ уйăх хушшинче мĕн пурĕ те 17 трактор çеç йусама ĕлкĕрнĕ.

Трактор паркĕ килес çул татах та нумай ӳсмеле. Çав май тракторксем нумай кирлĕ пулаççĕ. Çитес çуркуннене республикипе çĕнĕрен пурĕ 1000 тракторис ытларах кирлĕ пулсан та, пайан куна нихăш МТСтанцинче те çав кадрсене хатĕрлеме тытăнман. Ӳссе пыракан трактор паркĕ валли çĕнĕ кадр хатĕрлес ĕçпе тракторсене йусас ĕçре çак кунсенчех улшăну пулмала.

„Тĕрĕс пусăçаврăнăшĕсем туса ĕçе кĕртесси çинчен“ ССР Сойузĕн Çĕрĕç халăх комиссариачĕн тата Тĕштырăпа Вылăхчĕрлĕх Совхозĕн халăх комиссариачĕн комиссийĕ йышăннă постановлени пройекчĕ тухнăранпа 5 уйăх иртрĕ. Çав вăхăт хушшинче кашни колхозрах, кашни районрах пройект çинчен тĕплĕн сӳтсе-йавса тивĕçлĕ ĕçсем йышăнмала пулнă. Çавăн пекех Çĕрĕç халăх комиссариачĕн те республикă условийĕсене пурне те шута илсе, республикăра малашне мĕнле пусуçаврăнăшсем пулма тивĕçлине палăртса тухмала пулнă. Тӳрех каламала, çак ĕç ку таранччене лĕтĕмпех хăй йуххипе пулса пырать, Çĕрĕç халăх комиссариачĕ районсем çине шанса тăнă. Пусуçаврăнăшсене йĕркелес ĕç малашне нийепле те çавăн пек пĕр вырăнта тăма пултараймасть. Пăтраштарса йанă пусуçаврнăшсене халех пăхса тухса, çуракине тухиччен йĕркелесе çитермеле.

Çавăн пекех, колхозниксене агротехникăпа вĕрентес тĕлĕшпе те Çĕрĕç халăх комиссариачĕ йенчен нимĕнле пуçару та çук. Мĕнле ĕç йенĕпе мĕн чухлĕ çын вĕрентмелине кăтартса пайан кунччен те районсем тăрăх план туман. Çавăнпа пĕрлех тата. колхозниксене заочный йĕркепе вĕрентес ĕç те чарăнса ларнă.

Кăçал колхозсем вăйлă тырпул туса илчĕç. 1937 çулта вăйлă тырпул туса илни 1938 çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешессине пĕртте лăплантарма пултараймасть. 1938 çулта пирĕн татах та вăйларах тырпул туса илмеле, килес çулхи тырпулшăн татах та вăйлăн кĕрешмеле. Пайан куна илсен, килес çулхи тырпулшăн кĕрешес ĕç кирлĕ пек пулса пырать тесе нийепле те калама пултараймастпăр. Тырпул тухăçне ӳстерес ĕçре пысăк вырăнта тăракан ĕçсенчен пĕрне—кĕрхи çĕртме тумали плана та республикипе 87 процент çеç тултарнă. Çав çитменлĕхе агротехникăла урăх тĕрлĕ ĕçсемпе саплама тăрăшни те çук-ха. Халь ĕнтĕ, хĕлле тумали агротехникăла ĕçсене пурнăçа кĕртме тытăнмала,—уйа тислĕк, торф кăлармала, калчасене шăнса пĕтесрен сыхламали ĕçсене тумала тата ыт. те. Анчах, çак ĕçсем тĕлĕшпе план тăвасси çинчен халĕ Çĕрĕç халăх комиссариатĕнче калаçаççĕ çеç.

Уй-хире çемçетмелк минераллă çăпăхсене хатĕрлес тĕлĕшпе те ĕç питех те начар тăрать. Вăрнарти фосфорит заводĕнчи 8 пин центнер фосфорит çăпăхĕ выртать. Завод склачĕсем пурте тулли лараççĕ. Фосфорит çăпăхне турттарса хатĕрлесе хурас йенĕпе нихăш районра та йертсе пыни çук.

Çĕрĕç халăх комиссариачĕн çĕрĕк руководствине улăштарнă. Çавăн хыççăн Çĕрĕç халăх комиссариачĕн ĕç меслетне те тĕпренех улăштармала, районсене конкретлă, оперативлă йертсе пырассине вăйлатмала.

Халь пĕтĕм çĕршыв, социалисăмла тăван çĕршыврк нумай мĕлйунлă пĕтĕм халăх чаплă куна—декабĕрĕн 12-мĕшне, влаçăн аслă оргăнне суйлас ĕçе хатĕрленет. Предприйатисенче ĕçлекенсем, машинă-тракторлă станцисемпе совхозсенчи рабочисем тата колхозниксем çав историлĕ куна политикăла тата производствăла пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илеççĕ.

Çĕрĕç оргăнĕсен, агрономсен, тата колхоз руководителĕсен колхозниксен ĕç хастарлăхне çĕнĕ йалхуçалăх çулне хатĕрленес йенĕпе илсе пырса, çитес çулта колхозсен уй-хирĕнчен вăйлăран та вăйлă тырпул туса илесскĕн большевикла кĕрешӳ пуçарса йамала. Колхозсене хĕсĕнсе кĕнĕ клас тăшманĕсене тăпăлтарса тăкса, йалхуçалăх ертелĕн уставне çирĕп пурнăçа кĕртсе пырасси çине ытларах çаврăнса пăхмала.

Информацилĕ пĕлтерӳ

1937 çулхи нойаберĕн 23-мĕш, 24-мĕш, 25-мĕш тата 26 мĕш кунĕсенче Мускавра, ĕç дворецĕнче—Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн çуртĕнче, профсойузсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешӳвĕн делегацийĕпе ССР Сойузĕнчи профсойузсен Тĕп Совечĕн делегацийĕ хушшинче калаçусем пулнă. Профсойузсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешӳвĕн делегаци составĕнче:

Профсойузсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешӳвĕн вице-президенчĕ ЖУО, генеральнăй секретарĕ ШЕВЕНЕЛЬС, генеральнăй секретарĕн помошникĕ ШТОЛЬЦ пулнă; ССР Сойузĕнчи профсойузсен Тĕп Совечĕн делегацийĕ составĕнче унăн секретарĕсем—Н. М ШВЕРНИК, П. Г. МОСКАТОВ, К. И. НИКОЛАЙЕВА пулнă.

Канашланă хыççăн икĕ делегацийĕ те ССР Сойузĕнчи профсойузсем, профсойузсен пĕтĕм тĕнчере вăрçа хирĕç тата фашисăма хирĕç кĕрешмели пĕрлĕх фрончĕн никĕсĕ çинче, профсойузсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешӳвĕпе пĕр пулса ĕçлемели тĕп условисене йышăннă.

Совет профсойузĕсен делегацийĕ тата профсойузсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешӳвĕн делегацийĕ, калаçна хыççăн йышăннă тĕп положенисене, халех, çирĕплетмешкĕн тăратма пулнă—пĕр йенчен, Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн президиумне, тепĕр йенчен, профсойузсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешӳвĕн бӳроне тата генеральнăй советне.

Çак организацисем çӳлте асăннă сĕнӳсене пăхса тухса çирĕплетнĕ хыççăн, совет профсойузĕсем профсойузсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешӳне кĕрес ыйтăва практикăла татмала пулать. (ТАСС).

Округри суйлав комиççисем пурте Мускавпа çыхăну тытаççĕ

Çыхăну Халăх Комиссариачĕ округри суйлав комиççисем вырнаçнă центрсене Мускавпа çыхăнтарас ĕçе туса çитернĕ.

Халĕ Сойуз Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен пур 569 округри суйлав комиççине тата Национальнăçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен 574 округри суйлав комиççине Мускавпа çыхăнтарнă. Мускавпа 513 округри суйлав комиççи телефонпа, ытти комиççисем радиопа тата телеграфпа çыхăнса тăраççĕ. (ТАСС).

Хамăр тăван çĕршывăн чи тивĕçлĕ ывăлĕсемшĕн сасăлатпăр

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали суйлав кампанийĕ аслă Совет Сойузĕн пĕтĕм талккăшĕнчех нихăçан пулман хастарлăхпа тата питĕ пысăк çĕкленӳпе иртет. Совет халăхĕ Сойуз Советне тата Национальнăçсен Советне депутата суйлама палăртнă кандидатурăсене суйлав умĕнхи пиншер пухусенче, митингсенче, канашлусенче анлăн сӳтсе-йавать.

Пур пухусенче те ĕççыннисем пĕрремĕш сăмаха халăхсен аслă ăрăн тата аслă çулпуçне, ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали пĕрремĕш кандидата Иосиф Виссарионович Сталина чĕререн парăнни тата йуратни çинчен калаççĕ.

Нойабĕрĕн 26-мĕшĕнче Магнитогорскри Кировски районри ĕç çыннисен вилĕк пин çынлă суйлав умĕнхи канашлăвĕ пысăк çĕкленӳпе иртнĕ.

Суйлавçăсем Национальнăççен Советне депутата суйламали хăйсен кандидатне Магнитогорскри металлурги комбиначĕн директорне Павел Иванович Коробова туссăн та ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ. Коробов йулташ суйлавçăсене хăйĕн пурнăçĕ çинчен, хăй Серго Орджоникидзене, ĕççыннисен йуратнă çулпуçĕпе Сталин йулташпа тĕл пулни çинчен каласа панă.

„Епе ĕççыннисем шаннине ĕçпе тăварма,—тенĕ Коробов йулташ,—пĕтĕм вăйа, пĕтĕм большевикла çирĕплĕхе хуратăп. Епĕр металлургсен пĕтĕм коллективĕпе Сталин йачĕпе тăракан Магнитогорск комбинатне хура металлургин малта пыракан предприйатийĕсен еретне тăратассишĕн тăрăшатпăр. Кирлĕ пулсан, хамăн пурнăçа вĕçне çитиччен хамăрăн йуратнă тăван çĕршывшăн, Ленин—Сталин парти еçĕшĕн паратăп“.

Саратов облăçĕнчи Вольск хулинĕ хăйĕн суйлавçисем патне Сойуз Советне депутата суйлама Вольск суйлав округĕ тăрах палăртнă кандидат, ССР Сойузĕн прокурорĕ Андрей Йануарович Вышинский пынă. Вышинский йулташ Вольскри цемент завочĕсенчи рабочисен, инженерсен, служăщисен тата вĕсен çемйисенчи çынсен суйлав умĕнхи пухувĕнче пулнă.

„Епĕр Вышинский йулташа Сойуз Советне депутата суйлама кандидата палăртрăмăр,—тенĕ пухура „Большевик“—заводăн йаглă стахановецĕ Шмакалов йулташ,—мĕншĕн тесен вăл Аслă Сталинăн тӳрĕ ученикĕ. Епĕр Вышинский йулташа кандидата палăртрăмăр, мĕншĕн тесен вăл рабочи клас еçне вĕçне çитиччен парăнна. Вăл ССР Сойузĕн прокурорĕ пулса, троцкисла бухаринла тасамарлăха пĕр херхенмесер çĕмерчĕ, çĕмерет те.

Тухса калаçакансем пурте Вышинский йулташа саламланă тата суйлав кунĕнче хăйсен сасĕсене уншăн пама хатĕрри çинчен каланă.

Суйлавçăсем хĕрӳлĕ кĕтсе илнĕ Вышинский йулташ пухура сăмах тухса каланă. Вышинский йулташ хăйĕн пурнăçĕпе еçĕ çинчен тĕплĕн каласа панă, тата малала та троцкисла-бухаринла йĕрĕнчĕксемпе пĕр херхенмесĕр кĕрешме тата вĕсене хамăран революциле социалисăмла тĕрĕс суд пулашнипе вĕçне çитиччен тĕп тума сăмах панă.

Украинăри Шепетовски суйлав округĕнчи ĕççыннисем Сойуз Советне депутата суйлама кандидата Совет Сойузĕн маршалне Семен Михайлович Буденный йулташа палăртнă. Çак кунсенче С. М. Буденный хăйĕн суйлавçисем патне çыру йанă. Вăл çырура Буденный йулташ суйлавçăсене хăйне шаннăшăн тав тăвать, граждан вăрçин тăвăллă кунĕсене аса илет, революцин аслă стратегĕ Иосиф Виссарионович Сталин йертсе пынипе, çунă Совет Сойузĕн çитенӳвĕсем çинчен, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн çитенӳвĕсем çинчен каласа парать.

С. М. Буденный йулташăн çырăвне Шепетовски суйлав округĕнчи заводсенче, колхозсенче сӳтсе-йаваççĕ. (ТАСС).

Суйлавçăсем Сойуз Советне депутата суйламали кандидатпа—Максим Максимович Литвинов йулташпа тĕл пулни

ЛЕНИНГРАД, нойабĕрĕн 27-мĕшĕ (ТАСС). Нойабĕрĕн 27-мĕшĕнче Ленинград хулинчи Петроградскипе Василеостровски районсенчи суйлавçăсем суйлав умĕнхи пухура Сойуз Советне депутата суйламали хăйсен кандидачĕпе—Максим Максимович Литвиновпа тĕл пулнă.

Пухура икĕ пин çын ытла—рабочисем, работницăсем, инженерсем, служăщисем, килхуçи хĕрарăмĕсем пулнă.

Пухура сăмах тухса калакансем пурте хăйсем тăван çĕршыва, коммунисла партине тата ăсларан та ăслă çулпуçне Сталин йулташа парăнни çинчен каланă. Суйлавçăсем, Ленинград ĕççыннисене, ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун аслă Сталинăн тӳрĕ соратникĕсене—М. И. Калинин, А. А. Жданов, М. М. Литвинов йулташсене суйлама сасă пама тӳрĕ килнĕ пысăк савăнăç тата чыс çинчен каланă.

Лăпкă саманан Сталинла знаменосцĕ—Литвинов йулташ ĕçĕсем çинчен „Пирометр“ завочĕн аслă инженерĕ Андрейев йулташ каланă. Вăл каланă вăхăтра президиума Литвинов йулташ пырса тухать.

Пуху лăпкă саманашăн пĕр ывăнмасăр кĕрешекен бореца—Литвинов йулташа хĕрӳлĕ кĕтсе илнĕ. Саламлă сасăсем илтĕнсе кайаççĕ.

Литвинов йулташ сăмах тухса каланă. Вăл каланă чухне темиçе хут алă çупнă.

Пуху пысăк хавхаланупа пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен çулпуçĕ Сталин йулташ патне саламлă çыру йама йышăннă.

„Çурçĕр полюсĕ“ станцинче

„Çурçĕр полюсĕ“ станци вырнаçнă пăр çаплах кăнтăр йенелле куçса пырать. Нойаберĕн 27-мĕшĕнче, кăнтăрла иртсен пĕр сехетре, Папанин лагерĕ çурçĕр широтин 83 градус та 01 минутĕнче тата хĕвельанăç долготин 5 градус та 47 минутĕнче пулнă. (ТАСС).

Канаш районĕнчи суйлав умĕнхи канашлу

(Цыганов фот-ӳкерчĕкĕ).

Горкин Александр Федорович—ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕ. Национальнăççен Советне депутата суйланма Канашри № 500 суйлав округĕнче баллотировкăна тăрать.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Горкин йулташ хăйĕн суйлавçисем патĕнче.

(Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ).

А. Ф. Горкин йулташ Сиккассинче

Сиккасси суйлав участкинчи суйлавçăсем А. Ф. Горкин йулташ вĕсем патне килессине ĕнер иртенпех кĕтрĕç. Хĕрлĕ плошчĕдри урам праçник тумĕпе тумланнă. Пур çĕрте те лозунгсем, çулпуçĕсен портречĕсем. Каç пулас умĕн колхоз клубне ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнă, ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн секретерĕпе—А. Ф. Горкин йулташпа куçа-куçăн курăнса калаçма 800 суйлавçă пухăннă.

Пуху уçăлчĕ. Президиум суйларĕç. Доклад тума А. Ф. Горкин йулташ сăмах илчĕ. Пуху А. Ф. Горкин йулташа нумайччен алă çупса кĕтсе илчĕ.

—Йулташсем,—тет А. Ф. Горкин йулташ,—епĕ чи малтан мана пысăк шанчăклăхпа шаннăшăн, пысăк чыса кĕртсе Канаш суйлав округĕ тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Национальнăççен Советне депутата суйлама кандидата палăртнăшăн, Чăваш республикинчи рабочисемпе колхозниксене, служăщисене тата интеллигенцине пĕтĕм чĕререн тав тăватăп (**хытă алă çупаççĕ**). Епĕ Сирĕн пысăкран та пысăк шанчăка, Ленин—Сталин партишĕн, халăх ĕçĕшĕн, хамăрăн чи чаплă çĕршыв хăватлăхĕпе мухтавлăхĕшĕн пĕтĕм вăйпа ĕçленипе тивĕçлĕ пулма шантаратăп. (**Алă çупаççĕ**).

—Пирĕн тĕнчипе чи паллă, чи демократилĕ Сталинла Конституци пур. Вăл пĕтĕм ĕççыннисене ĕçлеме, вĕренме, канма пĕртан права парать. Çав правасем мĕнле пурнăçланса пыни çинчен, социалисăмла çĕршывра аслă çулпуç Сталин йулташ йертсе пынипе коммунисăм çĕнтерсе пыни çинчен А. Ф. Горкин йулташ примерсемпе, цыфăрсемпе кăтартса парать.

Малала А. Ф. Горкин йулташ суйлавçăсене хăйĕн биографийĕпе паллаштарса хăйĕн сăмахне çапла пĕтерчĕ:

—Епĕ ĕçхалăхĕнчен тухнă. 1914 çултанпа революцилĕ ĕçе хутшăннă. Йаланах большевиксен партийĕн шанчăклă ывăлĕ пулса, парти йертсе пынипе ĕççыннисемшĕн ĕçленĕ, йаланах вĕсемпе пĕрле пулнă, вĕсенчен ĕçлеме вĕреннĕ. Нихăçан та парти çулĕйĕрĕнчен пăрăнман, массăсенчен уйăрăлса кайман. Халăх тăшманĕсене хирĕç большевикла хайарлăхпа, тата курайманлăхпа кĕрешнĕ. Малашне те Ленин—Сталин партин тата социалисăмлă çĕршывăн чи шанчăклă ывăлĕ пулма, никам çĕнтерейми Маркс—Енгĕлс—Ленин—Сталин йалавне çӳлерен те çӳле çĕклесе пырса, коммунисăмшăн пĕтĕм вăйпа кĕрешме пулатăп. (**Алă çупаççĕ**).

Сывă пултăр аслă совет халăхĕ!

Сывă пултăр Хĕрлĕ çар, унăн пĕрремĕш маршалĕ Ворошилов!

Сывă пултăр рабочисемпе хресченсен государстви, ăна йертсе пыракансем Калинин тата Молотов йулташсем!

Сывă пултăр пирĕн чи йуратнă, хаклă çулпуç Сталин йулташ! (**Тăвăллăн алă çупаççĕ, ура çине тăрса аслă çулпуçа Сталин йулташа саламлаççĕ. „Сывă пултăр Сталин! Сталин йулташ—„урра!“**)

А. Ф. Горкин йулташ хыççăн Бусыгин, Петрова, Конйукова, Пикалов, Семенов, Попова, Белский йулташсем тухса калаçрĕç.

—Епĕр, Сиккасси суйлав участкинчи суйлавçăсем, Ленин—Сталин парти ĕçне чĕререн пурнăçласа пыракан, çĕршывăн чи шанчăклă çынĕсемшĕн—А. Ф. Горкин, В. П. Чкалов, Йе. П. Цыганова йулташсемшĕн хамăр сасăсене паратпăр!—теççĕ вĕсем.

Пуху „Интернационал“ йурланипе хупăнчĕ. Пуху хупăнсан сценă çине „Шмидт“ колхозĕн Мурзуков колхозник йертсе пыракан хор тухрĕ. Вăл „Песня о Сталине“, „Песня о родине“ йурăсене вырăсла, „Песня о Ворошилове“, „Чапайев“ т. ыт. халăх йуррисене чăвашла йурласа пачĕ. А. Ф. Горкин йулташ хор маçтăрлăхне ырласа, алă çупрĕ, мухтарĕ. Кайран ăшшăн сывпуллашса А. Ф. Горкин йулташ Сухайкасси, Асхва йалĕсене карĕ.

300 ытла çĕнĕ колхоз организациленĕ

Хĕвелтухăç Казахстан облăçĕнче йулашки виçĕ уйăх хушшинче 1.129 йединоличник колхоза кĕнĕ. Кăçал облăçра 300 ытла çĕнĕ колхоз организациленĕ. (ТАСС).

Декаберĕн 12-мĕшĕнче пурте Аслă Совета суйлама тухар!

Национальнăçсен Советне депутата суйлама палăртнă кандидат Михаил Иванович Калинин каланă сăмах

Нойаберĕн 23-мĕшĕнче Михаил Иванович Калинин йулташ Ленинградри Выборг тата Красногвардейск районĕсенчи суйлавçăсемпе тĕл пулнă. Суйлав умĕнхи пухура çав районсенчи ĕçсыннисен представителĕсем 2 пин çын пухăннă. М. И. Калинин йулташ пухура сăмах тухса каланă.

—Йулташсем,—тенĕ М. И. Калинин йулташ, — епĕ вата Выборг районĕнчи рабочисем хушшинче пулнипе тата вĕсемпе канашланипе хам ăшра пит пысăк савăнăç туйатăп.

Вата Выборг районĕнчи рабочи,—кăшт та пулин истори çине çавăрăнса пăхас пулсассăн, — вăл реакцин чи йавăр вăхăчĕсенче те ун патĕнче большевиксен партин Петербург комитечĕ тата пирĕн партин Тĕп Комитечĕ йаланах вăйлă тĕрек тупнă рабочи. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).** Ку вăл пит лайăх истори! Манăн, çапла пултăрчĕ тес килет,—Выборг тата Красногвардейск районĕсенчи рабочисем, вĕсем иртнĕ вăхăтра пĕр районра пулнă, революциле пролетариатăн çав калама çук ырă традицийĕсене сыхласа усраччĕр. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Выборг районĕнче епĕ революци пуçланас умĕнхи вăхăтра пурăннă. Унчухне епĕ кунта пит ырă активиссене, рабочи клас интересĕсемшĕн, парти интересĕсемшĕн, хăйсен пурнăçне пама пĕр минутлăх та туртăнса тăрас çук çынсене нумай тĕл пулнă. Епĕ халь ĕнтĕ çапла шухăшлатăп:—Выборг тата Красногвардейск районĕсем, çак районсенчи активударниксем, стахановецсем совет интеллигенцийĕ, рабочи класпа тачă тăванла сыхăнса тăракансем, çĕнĕ ĕçре те хăйсен хисеплĕ вырăнне йышăнса тăма пĕтĕм вăйа хурса тăрăшĕç. **(Алă çупаççĕ).**

Йулташсем, пирĕн халĕ суйлав кампанийĕ, йе епĕр ăна суйлав умĕнхи кампани текенни пырат. Ку вăл пит вăрăм вăхăта пыракан пысăк кампани, ăна ертерме материаллă средствăсем те, çынсен вăйне те нумай хумала килет.

Буржуалă çĕршывсенчи нумайрах чухне суйлав кампанийĕсене пирĕн суйлав кампанийĕнчен чылай кĕскерех вăхăт хушшинче иртереççĕ. Унти пуçпулса тăракан классем суйлав кампанийĕсенче тăвакан тĕллевсем, Совет Сойузĕнчи рабочи клас, колхозлă хресченсем, пирĕн партк, парти руководителĕсем пирĕн суйлав кампанийĕнче хăйсем умне лартакан тĕллевсенчен пĕтĕмпех ăрасна.

Капиталисăмла çĕршывсенчи пуçпулса тăракан классем суйлав кампанине иртернĕ чухне хăйсем умне лартакан пĕртеппĕр задачă—парламента кĕрсе кайасси, унта чи нумайрах вырăн йышăнасси пулат. Буржуалă партисем кирек мĕнле киревсĕр тата ултавлă майсемпе хăтланма та туртăнса тăмаççĕ. Вĕсемшĕн чи кирли—хăйсем мала тухасси, парламентра нумайрахăш пулса тăрасси, правительствăри постсене йышăнса, хăйсене пулăшакан ушкăнсене усă тăвасси пулат. Буржуалă партисем суйлав кампанийĕнче çынсене анкă-минкĕлетме, мĕнле те пулин фальшивкă туртса кăларма, çав фальшивкăпа улталаса парламентра нумайрахăш вырăнсене йышăнма тăрăшаççĕ. Буржуалă партисем суйлав кампанинче çавна тума çеç тăрăшаççĕ. Пуçпулса тăракан классем шутлаççĕ: ĕçхалăх массисене ăнран йарас пулат, çав майпа суйланса йулас пулат, теççĕ. Вĕсен урăх тĕллевсем çук.

Пирĕн суйлав кампанийĕ пит вăрăм вăхăт хушши пырат. Тĕрĕссипе илсен, вăл икĕ çул кайала, Конституци мĕнле пулмалине палăртнисене чи пирвай пичетлесе кăларнă вăхăтран пуçланнă. Унтан Конституци пройектне пичетлесе кăларнă. Çав Конституцийе чăннипех миллионшар çынсем сÿтсе-йавнă. Ăна сÿтсе-йавнă хыççăн суйлав саккунне туса хатĕрленĕ. Сăмах майĕн каласан, пирĕн суйлав саккунĕ Конституци пройекчĕн кашни пунктне демократисăмла чи анлăн сармала туса ăнлантарнă **(алă çупаççĕ),** халăхăн прависене сарас, халăхăн çав прависене саккунласа çирĕплетсе хурас йеппе ăнлантарса панă.

Ыйту тухса тăма пултарат: епĕр вĕт пĕлсех тăратпăр—Совет Сойузĕнчи ĕçсыннисем çак влаçах хăвараççĕ, влаçрах йулаççĕ **(алă çупаççĕ),** апла пулсан вăрăм вăхăт хушши пыракан, ăна иртерме çав тери нумай вăй хумали суйлав кампанийĕ мĕншĕн кирлĕ-ха, мĕншĕн-ха епĕр çав тери сложнăй суйлав кампанийе пуçарса йатăмăр? Суйлав кампанине çапла иртерес пулат—вăл Совет Сойузĕнчи ĕçсыннисен массисемшĕн те, çав ĕçсыннисен массисем хушшинчен тухнă руководителсемшĕн те пит пысăк шкул, политикăла пит пысăк шкул пулса тăтăр.

Социалисăм чухне ĕçсыннисен массисем чи организациллĕ пулни кирлĕ. Иртнĕ вăхăтра, пирĕн социалисăмла республикă организациленичченс, социалисăмла стройшăн массăсем çав тери организациллĕ пулни кирлĕ пеккисем—тĕнчере пĕр правителствă та, пĕр влаç та пулман. Тĕплĕн илсен, ĕçсынни массисем организацилнсе çитни—çавă пулат те социалисăм. Мĕншĕн тесен, кирек хăш çĕршывра та ĕçсыннисен массисем организацилнсе çитнĕ тата çав организацилĕхе рабочи класăн интересĕсемшĕн йарас пулсан,—унта вара рабочи класăн çавăн пек вăйне хирĕç капиталисăмла правителствă тытăнса тăнă пулĕччĕ-и?! Акă ĕнтĕ, социалисăмла строй пулса çитнĕ, ÿснĕ тата çирĕпленнĕ, çак строй чухне ĕнтĕ—пирĕн çĕршыв умĕнче тăракан государствăла тĕп тĕллевсемшĕн—ĕçсыннисем чи организациллĕ тата вĕсем чи пĕтĕçÿллĕ пулни кирлĕ.

Унтан, суйлавсем Совет Сойузĕнчи ĕçсыннисен массисем хушшинчен ÿссе çитĕннĕ чи лайăх çынсене ĕçе лартма май параççĕ.

Суйлав кампанийĕнче парти умĕнче тата ĕçсыннисен массисем умĕнче çак задачăсем тăраççĕ. Çав задачăсем пит хаклăскерсем.

Ман умăн Хĕрлĕ çарти йулташсем тухса калаççĕ. Хĕрлĕ çар—вăл пирĕн çар, тăван çар, ăна епĕр йуратапăр. Епĕ хам çапла шухăшлатăп: пирĕн Хĕрлĕ çар, хăйĕн вăрçас хăвачĕпе—тĕнчери чи лайăх çар пулса тăрат. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).** Тăшманпа тытăçмала килсе тухас пулсан, Хĕрлĕ çар хăйĕн вăйне, паттăрлăхне, творчествăла пултарулăхĕсене чи хăватлăн кăтартĕ. Çак çарăн хăватлă халăх çине, организациллĕ халăх çине тайанса тăмала; çак çар хăй хыçĕнче ĕçсынни массисен хăватлă организацилĕх пуррине туйса тăнă чухне çеç вăйлă та никам çĕнтерейми пулат. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Суйлав кампанийĕ массăсен миллионĕсене организацилет; вăл çак миллионсен тимлĕхне пĕтĕм государствăн политикинче чи паха пулса тăракан ыйтусем тавра пуçтарат. Суйлав кампанийĕ хăйĕн кулленхи, йаланхи ĕçне туса пыракан кашни çынна çĕклентерет, ăна çÿлерехре тăракан тăват. Вăл кашни рйадовой çынна, вăл çынăн пуçмимине хĕрÿлĕрех, вăйлăрах ĕçлеттерет. **(Алă çупаççĕ).** Кашнийех хăйне хăй—епĕ рйадовой çын мар, епĕ революциле çарăн бойецĕ, тесе шутлат, вăл çак вăхăтра аслă Совет Сойузĕн пĕтĕм халăхĕпе уйрăмах çирĕп сыхăнса тăнине туйат. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Есĕр хăвăрах пĕлетĕр: организаци—вăл пит паха йапала. Пирĕн большевиксен партийĕ хăйĕн организацилĕхĕпе çĕнтерчĕ. Иртнĕ çулсенче çак Выборг районĕнчех мĕнле пулнине астăватăр-и? Пирĕн оратăрсем хăш чухне меньшевиксен оратăрĕсенчен кăшт вăйсăртарах та пулаччĕç. Интеллигенци пирĕн хушăра çукпа пĕрех пулнă. Мĕн тăвас-ха! Анчах меньшевикла оратора арпаштарса йама, пĕтĕм вăйа пĕр çĕре пуçтарса организациллĕ йĕркепе çапма епĕр йаланах пултарнă,—епĕр йаланах çавăн пек майпа ĕç турă, ку тĕлĕшпе епĕр йаланах малта пулнă. **(Алă çупаççĕ).** Пирĕн парти организаторсене чылайах нумай пăхса ÿстерчĕ. Акă есĕр те, кунта ларакансем,—сирĕн организаторла ăс тата сирĕн организаторла пултарулăх партийе пула пухăннă. **(Алă çупаççĕ).**

Оборонă ыйтăвĕсем патне таварăнатăп. Йулашки империалисăмла вăрçăн масштабĕсене астуса илсен, малашнехи вăхăтра пулма пултаракан вăрçăн масштабĕсем нумай пысăкрах пулаççĕ. Епĕр çавна капиталисăмла çĕршывсенче вăрçа хатĕрленниченчен куратпăр. Кунта организацилĕх мĕнре палăрмала-ха? Вăл çакăнта палăрмала — пойассем фронт патне, сехет механисăмĕ мĕнле тĕрĕс ĕçлет, çавăн пекех вăхăтра пырса тăччĕр: фронт илсе тăрас снарйадсем пĕтĕмпех çав снарйадсемпе пĕрле йаракан аттестатра каланă пек пулччĕр; кашни вăхăтра фронта мĕн кирлине тыл туйса тăтăр, ăнлантăр; сăмахран, кĕтмен çĕртен сывлăшран тапăнсан, çынсем йĕркерен ан тухчĕр; çавăн пек тапăнни хыççăн тепĕр минутран çĕнĕрен те çĕнĕрен организациллĕ пултăр; йалхуçалăхĕ, работниксен хисепĕ сахалрах йулнă пулин те, ĕçсене унченхи вăхăтри пекех вăйлăн туса пытăр; промышленнăç хăйĕн ĕç пултарулăхне тата темиçе хут ÿстертĕр. Çавсене простой физически вăйпа, трукăх сиксе тăнипе тата çĕкленÿллĕ хавасăлăхпах та туса хума çук. Социалисăмла хăватлă организациле пулсан çавсем пурте пулĕç.

Çавăн пек организаци вăл, маннă кĕрпи пек, турă ырлăхĕ пек, пĕлĕт çинчен ÿкмест. **(Кулаççĕ).** Çук. Ăна тăвас пулат, ăна тăвассишĕн кĕрешес пулат, ăна куллен кун малала йарса, лайăхлатса пырас пулат. Хамăра çак организацилĕхе хăнăхтарса пырас пулат. Массăсем вĕсем çине йертсе пыма шанчăк хупă çынсем, çав çынсем кирлĕ вăхăтра массăсен вăйне кирлĕ пек, социалисăмла государствăшăн усăллă валеçме пĕлччĕр.

Ку вăл пысăк задачă. Манăн çакна калас пулат: суйлав кампанийĕ ку тĕлĕшпе массăсене организацилеме пулăшат, массăсене мĕнле организацилемелине вĕрентет, массăсене хăйсене те организацилĕхе хăнăхтарат. Суйлав кампанийĕ пысăк массăсене курма тата çак массăсене паллă çулпа илсе пыма вĕрентет. **(Алă çупаççĕ).** Есĕр, йулташсем, çакăн çинчен тĕплĕн шухăшласа пăхсассăн, суйлав кампанийĕ, миллионшар, вуншар миллионшар çынсем хутшăнакан суйлав кампанийĕ, çав тери пысăк ĕç пулса тăнине, пирĕн çак ĕçе чи лайăххăн туса ирттермелине ăнланса илетĕр.

Хăшпĕрисем ыйту параççĕ: „Мĕнех вара, епĕ сасăлама пыратăп, анчах пурĕ те пĕр кандидат çеç уйăрнăçко, вăл пурĕпĕрех „суйланат“, теççĕ. Апла шухăшлани—йăнăш, пысăк йăнăш.

Капиталисăмла çĕршывсенче те суйлав чухне пĕр çыншăн сасăланисем пулаççĕ. Унта ун пекки вăл йаланах инсетри вырăнсенче, дворйансен йăхĕнчи выборщиксем пурĕ те 50 çын çеç тата тепĕр лорд пур çĕрте пулат,—ун пек çĕрте вара çав лорда „суйлаççĕ“ те. Пирĕн çĕршывра чылай çĕрте кандидатсем, пĕр кандидат пултăр тесе, сасăланма тăмаççĕ пулсан,—вăл ĕнтĕ çав кандидатсем социаллă йенчен тăванлă пулнăран, вĕсен политикăла тĕллевĕсем пĕр пекрен килет. **(Алă çупаççĕ).** Вуншар çĕршер пин суйлавçăсем тĕплĕн сÿтсе-йавнă хыççăн пĕр кандидат тăратма килĕшнĕ. Çакă пулат те ĕнтĕ вăл социалисăм палли. Çак паллă—ĕçсынни массисем хушшинче шалти хирĕçÿсем, буржуалă обществăра шалта пулакан хирĕçÿсем пек шалти хирĕçÿсем çуккине, пулас та çуккине кăтартса тăрат. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Епĕ сире тÿррипех калатăп: пирĕн суйлавçăсем нумайрахăшĕ хăйсен бюллетенĕсене урнăсене йарсассăн, фашиссен вожакĕсем нумайĕшĕ çапла шухăшлĕç: „пăхăр-ха, унта çар çеç мар вăйлă, çар хыçĕнче тата хăрушăрах вăй тăрат“, тейĕç. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Йулташсем,—епĕ ĕнтĕ кун çинчен ĕнерех каларăм, — пирĕн çĕршыври ĕçсыннисем вуншар çул хушши Ленин хыççăн, Сталин хыççăн пычĕç. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).** Тата Ленинградăн революциле пролетариачĕ йаланах малти ретре пычĕ. **(Тăвăллăн оваци тăваççĕ).**

Епĕ, йулташсем, çапла шухăшлатăп: Ленин хулинчи рабочисем Ленин—Сталин йалавĕпе çĕр проценчĕпех суйлава тухĕç. **(Нумайччен чарăнмасăр тăвăллăн алă çупаççĕ, „урра“ кăшкăраççĕ).** Ĕçсыннисен массисем тата ĕçсынни массисен авангарчĕ пулса тăракан коммунисла парти çав тери пĕрлĕхлине епĕр пĕтĕм тĕнчене кăтартса парăпăр. Епĕр хамăр сасăланипе çавна пĕтĕм тĕнчене кăтартса парăпăр. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ, сасăсем: „Сывă пултăр аслă Сталинăн соратникĕ Калинин йулташ, урра!“).**

„Стройдеталь“ трестра ĕçлекенсем Йе. П. Цыганова йулташа саламлаççĕ

МУСКАВРА. „Союзстройдеталь“ трестĕнче ĕçлекен сотрудниксем ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Союз Советне депутата суйламали кандидат Йевдокийа Петровна Цыганова йулташ патне çапла çыру йана:

„Хаклă йулташ Цыганова, Йевдокийа Петровна!

Сире, Йевдокийа Петровна, ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама Канаш Суйлав Округĕ тăрăх кандидата регистрацилени çинчен пĕлнĕ хыççăн „Стройдеталь“ трестра ĕçлекенсен коллективĕ пирĕн комбинатри чи лайăх стахановкана, хĕрÿллĕн саламлат.

Есĕр, Йевдокийа Петровна, пирĕн парти пулăшса пынипе, Иосиф Виссарионович Сталин йулташ йертсе пынипе, хресчен хĕрĕнчен чи лайăх стахановка, Куславкка комбиначĕн лайăх маçтăрĕ пулса тăтăр.

Пирĕн парти çапла тăрăшнипе кăна, пирĕн çĕршывра çеç Ленин Сталин партийĕн ĕçне мĕн пур вăйхалĕпе хура ĕçлекен çынсем вĕсемсĕр ÿсме пултараççĕ.

Есĕр—цехăн чи лайăх стахановки, ĕçре ÿсрĕр, смена маçтăрĕ пултăр. Сирĕн смена производствăла ĕçсене туса пырас тĕлĕшпе мала тухса пырат. Сирĕн сменă—пĕтĕмĕшпех стахановла сменă. Епĕр ун çинчен лайăх пĕлетпĕр.

Есĕр хăвăрăн пĕлÿлĕхе ÿстерессишĕн тăрăшнине те, социалисăмла ĕçĕн маçтăрĕсен курсне вĕр нме çÿренине те епĕр аван пĕлетпĕр. Вăл курсран Есĕр „отлично“ паллăпа вĕренсе тухасса шанатпăр.

Епĕр Сире чĕререн, пысăк хавасăлăхпа саламлатпăр. Канаш Суйлав округĕнчи суйлавçăсем сирĕншĕн сасăласси(н)е шанатпăр, суйлавçăсем Сире шаннине есĕр парти ĕçне пĕтĕм вăйхалтан туса пынипе тивĕçлĕ пулăр, Маркс—Енгелс—Ленин—Сталин йалавне тата çÿлерех çĕклĕр.

Сывă пултăр коммуниссен партийĕ!

Сывă пултăр пирĕн тăван, йуратнă йулташ Сталин!

„Стройдеталь“ трестри коллектив пухăвĕ хушнипе — Вырăнти Комитет председателĕ Комаров“.

* *

Тата çакăн пек çыру „Стройдеталь“ трестра ĕçлекенсен пĕрлешÿллĕ пухăвĕ Цыганова Йевдокийа Петровнăна Аслă Совета депутата суйлама кандидата тăратнипе савăнса, Цыганова йулташа саламласа Куславкка комбиначĕнчи рабочисем, служащисем тата инженерла-техникла работниксем патне çыру йанă.

Вăрнар суйлав участкинче

Вăрнар суйлав участкинче ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалăх куна хатĕрленес тĕлĕшпе хĕрÿллĕ ĕç пырат. Парти райкомĕ уйăрса çирĕплетнĕ агитаторсемпе вулавçăсем тата пропагандиссем, пĕтĕмпе 40 çын, суйлавçăсем хушшинче агитациле тата пропагандăла ĕçе йеркелене. Пурĕ 16 кружокра 250 суйлавçă суйлав саккунне вĕренеççĕ. Ачалă хĕрарăмсемпе вата çынсене килĕсенче печченшерĕн, йе пĕр киле икĕ виçĕ çемье пуçтарса вĕрентеççĕ. ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнă—Пумпур, Чкалов тата Краснов йулташсен биографийĕсемпе паллаштараççĕ, вĕсен ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа параççĕ. Кунта радиопа та усă курма тăрăшаççĕ. Суйлав участкин председателе Цветков йулташ 4 хутчен радио тăрăх суйлав саккунĕ çинчен, суйлав участки мĕнле вырăнта пулни тата участкăна хăш урамсемпе çуртсем кĕни çинчен, суйлав хăш кун, сасăласси мĕнле сехет хушши пыни çинчен, суйлавçă мĕнле йĕркепе сасăлани çинчен доклад туса панă. Çакăнпа пĕрлех ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнă кандидатсен—П. И. Пумпур, В. П. Чкалов, тата А. М. Краснов йулташсен биографийĕсемпе вĕсен пултарулă ĕçĕсем çинчен радио тăрăх доклад туса панă.

Кашни урамра (пĕтĕмпе 6 урам) стена хаçачĕсем кăларма хатĕрленеççĕ.

Суйлав иртерме вăтам шкул çуртне йышăннă. Шкулăн виçĕ класĕнче 9 пÿлĕм пулат. Пÿлĕмсем вальли 27 шчит туса хатĕрленĕ. Кашни пÿлĕмрех пĕрер чÿрече, сетел, пукан, чернил, перопа ручкă пулаççĕ, вĕсем хатĕр. Суйлав кунĕ суйлавçăсем хăйсен вăхăтне культурăла иртереççĕ. Вĕсем вальли икĕ зал уйăрнă. Пĕринче—шашкă-шахмат вăййисем, хаçат-журналсем, радио, кĕнекесем т. ыт. те пулаççĕ, тепринче—физкультурă, хор кружокĕсем тата струнлă оркестр, кашнийех виçшер хутчен вылйаса кăтартаççĕ. Çак кружоксем халĕ тимлĕн хатĕрленме тытăннă.

Нумай çула çитнĕ суйлавçăсене суйлав çуртне илсе пыма, суйлава хутшăнсан киле леçме 5 лав уйăрнă. 3 çула çитиченхи 50 ача вальли детплошадка пулат.

Халĕ кашни урамрах суйлавçăсен пухăвĕсем пулса иртеççĕ. Вĕсем суйлав кунне хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен тимлен тишкерсе, суйлав участкине ĕçре пулăшса пыраççĕ, ăнланса илеймен ыйтусене ыйтса пĕлеççĕ. Нойаберĕн 23-мĕшĕнче пĕрремĕш пуху пулса иртнĕ. Вăл пухăва 60 суйлавçă пухăннă. Вĕсем 10 вата çынсене суйлавçăсен спискине кĕртменнине кăтартнă.

Капиталисăмла йĕри-тавралăх тата тĕн

Партин XVII-мĕш сйесĕнче Сталин йулташ пире капиталисăмла йĕри-тавралăхăн контрреволюциле ролĕ çинчен асăрхаттарнă. „Йуратĭ-ха,—тесе ыйтнă Сталин йулташ,—епĕр економикăра капиталисăм йулашкисене йăлтах пĕтертĕмĕр тесе калама? Çук, çакна калама çук. Кунтан та питрех—епĕр капиталисăм йулашкисене çынсен ăстăнĕнче пĕтернĕ тесе калама çук. Çакна çынсен ăстăнĕ хăйĕн аталанăвĕнче вĕсен економикăлă пурнăçĕнчен кайа йулса пынă пирки анчах та мар, тата капиталисăмла йĕри-тавралăх пирки те калама çук, çав капиталисăмла йĕри-тавралăх ССР Сойузĕн економикинче те, çынсен ăстăнĕнче те капиталисăм йулашкисене çĕнĕрен чĕртсе йама, тытăнса тăма пулăшса пыма тăрăшат, çакна хирĕç пирĕн, большевиксен, тăрă йаланах типĕ тытмала“.

Йапони—Германи—фашисла шпионсен, диверсанчĕсен процесĕсем ССР Сойузĕнчи ĕçсыннисене клас тăшманĕ хăйĕн хĕçпăшалне пăрахманнине пит тусçăн кăтартса пачĕç. Совет Сойузне хупăрласа тăракан капиталисăмла государствăсем, чи малтан—фашисла государствăсем социалисăм çĕршывĕнчи çапса аркатнă çĕмĕрсе тăкнă експлоататăрла классен йулашкисемпе пĕрлешме, социалисăм строителствине чарма, малкилсен ăна пĕтерсе хума пĕтĕм вăйа хураççĕ.

Ку тĕлĕшпе капиталисăмла йĕри-тавралăх тĕн тата тĕн организацисемпе вăйлăн усă курат.

Капиталисăмла пур çĕршывсенче те тĕне експлоататăрсем шутсăр хытă хÿтĕлеççĕ, унпăн тăрăшаççĕ. Ку ăнсăртран пулакан ĕç мар.

Капиталиссемпе çĕрулпучĕсене те рабочисемпе хресченсен революциле йухăмне хирĕç кĕрешме кирлĕ. Йутçĕршывсенче халĕ те, рабочисем капиталиссенчен лайăхрах ĕç услови пама ыйтсан, пуп тавращсем: хуçасене хирĕç тăмала мар тесе вĕрентеççĕ.

1926 çулти май уйăхĕнче Англири рабочисем ĕçе пăрахса, капиталиссем умне услови лартнă: ĕçкунне чакармасан, ĕç укçине ÿстермесен, епĕр ĕçлеме тытăнмастпăр тенĕ. Чиркÿ представителĕсем рабочисене ĕçе тухма, капиталиссемпе килĕшме чĕннĕ.

Ытти çĕршывсенче те çакăн пекех. Рабочисем хăйсен пурнăçне лайăхлатассишĕн кĕрешме тытăнсанах чиркÿ пырса тухат: пуп тавращсем рабочисене тÿрă йачĕпе ÿкĕтлеме тытăнаççĕ, кĕрешĕве пăрахăç тума вĕсене капиталиссем мĕн панипе çырлахма, капиталиссемпе килĕшме чĕнеççĕ. Паллах, тĕн ĕçсынни массисене мар, капиталиссен пĕчĕк ушкăнне кирлĕ. Тĕн вĕсене ĕçсыннисене пусмăрта тытма кирлĕ.

Çĕр çинче темиçе пин национальнăçсем пурăнаççĕ.

Експлоататăрсемшĕн ĕçсыннисем капиталисăма хирĕçме пултарайманни ,сăлă, мĕншĕн тесен, кун пек чухне вĕсене, ĕçсыннисене пусмăрлама çăмăл. Акă мĕншĕн ĕнтĕ експлоататăрсем йаланах нациле тата тĕн хирĕçÿне чĕртсе йани тăрăх ĕçсыннисен вăйĕсене ваклама тăрăшаççĕ. Патша правителстви çапла тунă. Вăл вырăссене— йеврейсем, польаксем, грузинсем, армйансем çине вĕслетсе йанă ,вĕсене курайми тунă. Патша правителстви йеврей, армйан, грузин халăхĕсене хирĕç погромсем тунă. Çак майпа патша правителстви ĕçсыннисене патшана, помещиксене, капиталиссене хирĕç кĕрешессинчен пăрнă.

Патша правителстви вăхăтĕнче Российăра пулнă ĕçсем халĕ çаплипех буржуалă пур çĕршывсенче те пулса пыраççĕ. Сăмахран, Англи буржуазийĕ темиçе çĕр çул кайала пуйан çĕршыва—Индийе туртса илнĕ, ăна вăл халĕ те хăй аллинче сăнчăрпа тытса тăрат. Англире 45 мĕлйун халăх, Индире 319 мĕлйун. Çакăн пек нумай мĕлйунлă халăха Англи буржуазийĕ мĕнле майпа тытса тăратха? Англи буржуазийĕ Индире пысăк çар тытат. Анчах ку çителĕксĕр. Çавăнпа та вăл Индире будда тĕнне тытакан халăха мусульман тĕнне тытакан халăха хирĕç тăратнă. Англи полицийĕ тĕрлĕ чийелĕхпе çак хирĕçĕве çапăçусем, хĕçпăшаллă çапăçусем патнех çитерет. Çавăнпа та Индири ĕçсыннисем пĕр-пĕрипе хирĕçеççĕ, тĕп—тăшманпа, Англи капиталисăмĕпе кĕрешессинчен, пăрат.

Наци тата тĕн хирĕçĕвĕ вăл — експлоататăрсемшĕн хăйсем пуç пулса тăрассине сыхласа усрамали май. Акă мĕншĕн ĕнтĕ капиталисăмла пур çĕршывсенче те тĕне буржуазипе помещиксем пулăшаççĕ.

Халĕ империалисăм саманинче, класлă кĕрешÿ питĕ çивĕчленсе пынă саманара, вилĕм патĕнче тăракан вырлăх империалиссем тĕнре хăйсене çăлăнăç кураççĕ. Капиталисăмла пур çĕршывсенче те государствă организацийĕсемпе чиркÿ организацийĕсем пĕрлешесси пулса пырат. Италири фашисăм Рим паппипе 1929 çултах килĕшÿ тунă. Çакнашкал килĕшÿсене Германире те, Польшăра та, Австрире те, Румынире те тата ытти çĕршывсенче те тунă.

Çак договорсем тăрăх, тĕнпе чиркÿ организацийĕсем капиталисăм çĕршывĕсенче буржуазин государствă аппарачĕн уйрăлми пайĕ пулса тăраççĕ. Пур çĕрте те материалисăмла чăн-чăн ăслăлăха хĕсеççĕ.

Çамрăксене воспитани парас ĕçе пур çĕршывсенче те пупсен аллине панă. Шкулсенче „закон божине“ вĕрентеççĕ. Нумайах та пулмаст ,Америкăра халăх учителне, Джон Скоса, ăна ăслăлăх (дарвинисăм) çын пуçланса кайни çине мĕнле пăхни çинчен вĕренекенсене каласа панăшăн тĕрмене хупса лартмала суд тунă.

Фашисăм вăл буржуазин реакциле сийĕн терроорла диктатурин формиĕ. Вăл ĕçсыннисем çине наступлени туса пынă чухне тĕнпе тата тĕн организацисемпе вăйлăн усă курат. Буржуалă çĕршывсенче чиркÿ организацисем усçăнах фашисла ушкăнсемпе пĕрлешеççĕ.

Германире Гитлер тата унăн хыççăн пыракансем хăйсен фашисла чиркÿне тăвассишĕн темĕн те тăваççĕ. Фашисăм пулăшнипе çĕнĕ тĕн культне—вата ĕмĕрсенчи тĕшмĕш Вотан турă тĕнне тума хăтланса пăхнă. Анчах та çĕнĕ тĕн Германире католик тата протестант тĕнне тытакансем кăмăлламаннине пула, фашисăм христиан тĕнĕ çине тайăнат.

Буржуалă çĕршывсенче ăслăлăх хĕсĕкре тăрат. Германире ăслăлăхăн чи лайăх представителĕсене хĕсĕрлеççĕ. Çак йулашки çулсенче пин çурă ытла учонăй Германирен тухса тарнă. Ăслăлăх вырăнне фашисла шкулсенче, университетсенче, тĕн кĕнекисенче, илемлĕ литературăра варварствăла мракобеси идейине сараççĕ. Медицинă журналĕсене чиртен лайăх емеллемели молитвăсемпе молебĕнсем, чи лайăх хирург—турă тесе çырса тултараççĕ. Германире врачсен хисепĕ чакса пынă вăхăтра, йумăçсем нумайланса пыраççĕ. Пĕр Берлин хулинче кăна 6 пин йумăç.

Капиталисăмла çĕршывсенче тĕн тата тĕн организацийĕсем капиталиссемпе фашиссен аллинче халăха улталамали идеологиллĕ вăй пулат. Тĕн пулăшнипе реакциллĕ империалисăмла вăйсем ĕçсыннисен революциле йухăмне, халăх фрончĕн политикине хирĕç, социалисăм çĕршывне хирĕç кĕрешеççĕ. Кунта чи малтан католик чиркĕвĕпе Римри папă Пий XI революциле йухăма хирĕç кĕрешес ĕçре малти ретре пынине кăтартмала.

Римри папă—Совет Сойузĕн чи усал тăшманĕ. Вăл 1929 çулта большевиксене хирĕç, Совет çĕршывне хирĕç „Крестовой поход“ организацилеме хăтланнă. Çак поход пирки питĕ хытă шавланă пулсан та, вăл кĕл пек арканса кайнă. Анчах та Совет Сойузĕ çак таса папăна канлĕх памаст. Вăл халĕ те коммунисăма хирĕç, большевиксене хирĕç вăрçă пуçласси çинчен ĕмĕтленет.

Римри папă фашисăма хирĕç кĕрешекен, халăхăн пĕрлĕх фронтне хирĕç тăрат. Римри папă Испанири фашисла пăлхавçăсем йенче, хăйĕн ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен Испани халăхне хирĕç тăрат. Вăл темиçе хутчен те Испанири пăлхавçăсен делегацисене йышăннă.

Испанири чиркÿсемпе монастырсем пăлхавçăсен штабĕсем пулса тăраççĕ. Испанири католик пупĕсем фашиссен разведкисенче ĕçлеççĕ. Тĕн тата тĕн организацийĕсем империалисăмла çĕнĕ вăрçă вутне чĕртсе йарасшăн активлăн ĕçлеççĕ. Итали фашисăмĕ вăйсăр Абиссини халăхне хирĕç вăрçнă чухне Ватикан (Римри папă пурăнакан çурт) фашиссене укçа-тенкĕ парса пулăшнă.

Йапони генералĕсене Китай халăхне хирĕç пыракан вăрçăра будда духовенстви активлă пулăшат. Будда пупĕсем Китай çĕршывне туртса илес ĕçре Йапони военщинин малта пыракан отрйачĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсем Йапони генеральнăй штабĕн разведкисем пулса ĕçлеççĕ.

Совет Сойузне хирĕç вăрçă пуçлас ĕçре капиталисăм çĕршывĕсенчи тĕн организацийĕсем чи малти ретре тăраççĕ. Христоса йуратакан чиркÿсенче рабочисемпе ĕçсыннисене массăлăн вĕлерме чĕнеççĕ.

Тĕн организацийĕсем уйрăмах коммунисла йухăма кураймаççĕ. Реакциллĕ буржуази хăйĕн чиркÿ организацийĕсем çине хăйĕн çĕршывĕнчи коммунисăма хирĕç тата уйрăмах—тĕнчери социалисăмла государствăна—советсен çĕршывне хирĕç кĕрешес ĕçре уйрăмах пысăк задач лартат.

Хăйсен çĕршывĕнчи коммунисла йухăма хирĕç кĕрешнипе пĕрлех, капиталисăмла государствăсенчи тĕн организацийĕсем Совет Сойузне хирĕç кĕрешме пур тĕрлĕ майсемпе те усă кураççĕ. Чиркÿсем урлă тата хаçат-журналсемпе кĕнекесем урлă СССР çинчен халиччен илтмен суйа сăмахсем тата елек сараççĕ. Çакнашкал тискер усал елек сарса, реакциллĕ чиркÿ çыннисем тĕне ĕненекен рабочисемпе хресченсене Совет Сойузне ĕненми, ун çине шанми туса, çапла майпа вара ССР Сойузĕ çине вăрçăпа тухма фашисăм вальли çăмăлрах условисем тăвасшăн.

Темиçе çул кайала йутçĕршывсенчи пасторсем сектантсене Совет Сойузĕнчен капиталисăм çĕршывĕсене куçарасшăн кампани пуçласа йанă. Сектантсенчен пĕркасси йутçĕршывсенчи чиркÿ çыннисен вăлтине çакланнă. Анчах, тепĕр çултан, ССР Сойузĕнчен тухса кайнă сектантсем пурте Совет правителствинчен совет çĕршывне кайала таварăнма ыйтнă, мĕншĕн тесен, вĕсем хăйсем çинче „капиталисăм райĕн“ тути-масине тутанса курнă.

Капиталисăмла çĕршывсенчи тĕн организацийĕсем пирĕн çĕршывра хăйсен шанчăклă агентурине тăвас тĕлĕшпе пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеççĕ. Капиталисăмла çĕршывсенче Совет Сойузне сăтăрла ĕçсем тума йама вĕрентекен шкулсем пур. Çав шкулсенче шпионсем, разведчиксем, диверсантсем вĕренеççĕ, вĕсене пирĕн çĕршыва йараççĕ.

Октябĕр революцин малтанхи кунĕсенчен пуçласах тĕн çыннисемпе сектантсем шургвардейцăсен ретĕнче пулса, рабочисемпе хресченсене тата вĕсен тăван Хĕрлĕ Çарне хирĕç активлăн кĕрешнĕ.

Интервентсене пулăшма чиркÿ çыннисем Çĕпĕрте „турамăш полкисем“, „исус полкисем“ тунă. Врангел генералпа интервентсене пулăшма сектант-меннонитсем йатарласа „меннонитский полк“ тунă. Пансен Польшине хирĕç çапăçнă чухне Украинăра чиркÿ çыннисем разведкăра ĕçленĕ.

Баптиссемпе ытти тĕн организацисем совета хирĕçле ĕç тума капиталисăмла çĕршывсенчен пысăк укçа-тенкĕ илсе тăнă.

Халĕ епĕр хамăр çĕршывра пирĕн пата капиталисла государствăсем йанă шпионсен, диверсантсен, сăтăрçăсен йăвисене кăклатпăр. Çак сăтăрçăсемпе шпионсем хушшинче чиркÿ çыннисем сахал мар. Акă Атăл тăрăхĕнчи Нимĕçсен республикинче нумай та пулмаст, танцбрудерсене, урăхла каласан, „таплакан пичĕшĕ“ текен сектă ĕçне тупса палăртнă. Çак сектă ĕлĕк пуп, офицер пулнăскерсем йертсе пынипе Германири фашисла организацисемпе тачă çыхăну тытнă, вĕсем хушнă тăрăх пирĕн çĕршыва сăтăрла ĕç тунă.

Капиталисăмла государствăсем пирĕн çĕршывра çапса аркатнă експлоататăрла классен йулашкисене çаплипех хăварасшăн. Вĕсем совета хирĕçле етемсене рабочи клас диктатурине хирĕç кĕрешме мобилизацилесшĕн пулнă.

Тĕн капиталисăма, фашисăма усăллă ĕç тунипе тăрă шыв çине кăлармала. Çакă вăл ĕçсыннисен революциле сыхăлăхне вăйлатат.

Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче пурте Аслă Совета суйлама тухар!

Национальнăçсен Советне депутата суйлама палăртнă кандидат Михаил Иванович Калинин каланă сăмах

Нойаберĕн 23-мĕшĕнче Михаил Иванович Калинин йулташ Ленинградри Выборг тата Красногвардейск районĕсенчи суйлавçăсемпе тĕл пулнă. Суйлав умĕнхи пухура çав районсенчи ĕçсыннисен представителĕсем 2 пин çын пухăннă. М. И. Калинин йулташ пухура сăмах тухса каланă.

—Йулташсем,—тенĕ М. И. Калинин йулташ, — епĕ вата Выборг районĕнчи рабочисен хушшинче пулнипе тата вĕсемпе калаçланипе хам ăшра пит пысăк савăнăç туйатăп.

Вата Выборг районĕнчи рабочи,—кăшт та пулин истори çине çаврăнса пăхас пулсассăн, — вăл реакци чи йăвăр вăхăтĕнче те ун патĕнче большевиксен партин Петербург комитечĕ тата пирĕн партин Тĕп Комитечĕ йалана вăйлă тĕрĕк тупнă рабочи. **(Тăвăллăн алă çупассĕ).** Ку вăл пит лайăх истори! Манăн, çапла пултăрчĕ те килет,—Выборг тата Красногвардейск районĕсенчи рабочисем, вĕсем иртнĕ вăхăтра пĕр районра пулнă, революцие пролетариатăн çав калама çук ырă традицийĕсене сыхласа усрачĕр. **(Тăвăллăн алă çупассĕ).**

Выборг районĕнче епĕ революци пуçланас умĕнхи вăхăтра пурăннă. Унчухне епĕ кунта пит ырă активиссене, рабочи клас интересĕсемшĕн, партии интересĕсемшĕн, хăйсен пурнăçне пама пĕр минутлăх та туртăнса тăрас çук çынсене нумай тĕл пулнă. Епĕ халĕ ĕнтĕ çапла шухăшлатăп:—Выборг тата Красногвардейск районĕсем, çак районсенчи активударниксем, стахановецсем совет интеллигенцийĕ, рабочи класла тăч тăванла çыхăнса тăраканскем, çĕнĕ ĕçре те хăйсен хисеплĕ вырăнне йышăнса тăма пĕтĕм вăйа хурса тăрăшĕç. **(Алă çупассĕ).**

Йулташсем, пирĕн халĕ суйлав кампанийĕ, йе епĕр ăна суйлав умĕнхи кампани текенни пырат. Ку вăл пит вăрăм вăхăта пыракан пысăк кампани, ăна ертерме материаллă средствăсем те, çынсен вăйне те нумай хумала килет.

Буржуалă çĕршывсенчи нумайрах чухне суйлав кампанийĕсенче пирĕн суйлав кампанийĕнчен чылай кĕскерех вăхăт хушшинче иртересçĕ. Унти пуçпулса тăракан классем суйлав кампанийĕсенче тăвакан тĕллевсем, Совет Сойузĕнче рабочи клас, колхозлă хресченсем, пирĕн партия, парти руководителĕсем пирĕн суйлав кампанийĕнче хăйсем умне лартакан тĕллевсенчен пĕтĕмпех ăраснă.

Капиталисăмла çĕршывсенчи пуçпулса тăракан классем суйлав кампанийĕнче пиртерне чухне хăйсем умне лартакан пĕртенпер задачă—парламента кĕрсе кайассăн, унта чи нумайăх вырăн йышăнасси пулат. Буржуалă партисем кирек мĕнле киревсĕр тата ултавлă майсемпе хăтланма та туртăнса тăмасçĕ. Вĕсемшĕн чи кирли—хăйсем мала тухассăн парламентра нумайрах пулса тăрасси, правительствăри постсене йышăнса, хăйсене пулăшакан ушкăнсене усă тăвасси пулат. Буржуалă партисем суйлав кампанийĕнче çынсене анкă-минкĕлетме, мĕнле те пулин фальшивкă туртса кăларма, çав фальшивкăпа улталаса парламентра нумайрахăн вырăнсене йышăнма тăрăшассĕ. Буржуалă партисем суйлав кампанийне çавна тума çеç тăрăшассĕ. Пуçпулса тăракан классем шутлассĕ: ĕçхалăх массисене йăран йарас пулат, çав майпа суйлама йулас пулат, тессĕ. Вĕсен урăх тĕллевсем çук.

Пирĕн суйлав кампанийĕ пит вăрăм вăхăт хушши пырат. Тĕрĕссипе илсен, вăл икĕ çул кайала, Конституци мĕнле пулмаллине палăртнисене чи пирвай пичетлесе кăларнă вăхăтран пуçланнă. Унтан Конституцин пройектне пичетлесе кăларнă. Çав Конституцийĕ чăннипех миллионшар çынсем сÿтсе-йавнă. Ăна сÿтсе-йавнă хыççăн суйлав саккунне туса хатĕрленĕ. Сăмах майĕн каласан, пирĕн суйлав саккунĕ Конституци пройекчĕ кашни пункчĕ демократисăма чи анлăн сармала туса йĕлантарнă **(алă çупассĕ)**, халăхăн прависене сарас, халăхăн çав прависене саккунласа çирĕплетсе хурас йенпе йĕлантарса панă.

Ыйту тухса тăма пултарат: епĕр вĕт пĕлсех тăратпăр—Совет Сойузĕнчи ĕçсыннисем çак влаçах хăвараççĕ, влаçрах йулассĕ **(алă çупассĕ)**, апла пулсан вăрăм вăхăт хушши пыракан, ăна иртерсе çав тери нумай вăй хумаллах суйлав кампанийĕ мĕншĕн кирлĕ-ха, мĕншĕн-ха епĕр çав тери сложнăй суйлав кампанийĕ пуçарса йатăмăр? Суйлав кампанийне çапла иртерос пулат—вăл Совет Сойузĕнчи ĕçсыннисен массисемшĕн те, çав ĕçсыннисен массисем хушшинчен тухнă руководительсемшĕн те пит пысăк шкул, политикăлă пит пысăк шкул пулса тăтăр.

Социалисăм чухне ĕçсыннисен массисем чи организацилĕ пулни кирлĕ. Иртнĕ вăхăтра, пирĕн социалисăмла республика организацийĕнче, социалисăмла стройăн массăсем çав тери организацилĕ пулни кирлĕ пеккисем—тĕнчере пĕр правительстви те, пĕр влаç та пулман. Тĕплĕн илсен, ĕçсынни массисем организацилĕ ситни—çавă пулат те социалисăм. Мĕншĕн тесен, кирек хăш çĕршывра та ĕçсыннисен массисем организациленсе çитнĕ тата организациленĕ рабочи класăн интересĕсемшĕн йарас пулсан,—унта вара рабочи класăн çавăн пек вăйне хирĕç капиталисăмла правительстăв тытăнса тăнă пулĕччĕ-и?!

Ака ĕнтĕ, социалисăмла строй пулса ситнĕ, ÿснĕ тата çирĕпленнĕ, çак строй чухне ĕнтĕ—пирĕн çĕршыв умĕнче тăракан государствăла тĕп тĕллевсемшĕн—ĕçсыннисен массисен организацилĕ тата вĕсем чи пĕтĕçÿлĕ пулни кирлĕ.

Унтан, суйлавсем Совет Сойузĕнчи ĕçсыннисен массисем хушшинчен ÿссе ситĕнĕ чи лайăх çынсене ĕçе лартма май парассĕ.

Суйлав кампанийĕнче парти умĕнче тата ĕçсыннисен массисем умĕнче çак асăнассем тăрассĕ. Çав задачăсем пит хак лăскерсем.

Ман умăн Хĕрлĕ çарти йулташсем тухса ларăç. Хĕрлĕ çар—вăл пирĕн çар, тăван çар, ăна епĕр йуратăтпăр. Епĕ вăл çапла шухăшлатăп: пирĕн Хĕрлĕ çар, хăйĕн вăрçас хăвачĕне—тĕнчери чи лайăх çар пулса тăрат. **(Тăвăллăн алă çупассĕ).** Тăшмана тытăçмала килсе тухас пулсан, Хĕрлĕ çар хăйĕн вăйне, паттăрлăхне, творчествăла пултарулăхĕсене чи хăватлăн кăтартĕ. Çак çарăн хăватлă халăх çине, организацилĕ халăх çине тайанса тăмала; çак çар хăй хыçĕнче ĕçсынни массисен хăватлă организацилĕх пурнне туйса тăнă чухне çеç вăл та никам çĕнтерейми пулат. **(Тăвăллăн алă çупассĕ).**

Суйлав кампанийĕ массăсен миллионĕсене организацилет; вăл çак миллионсен тимлĕхне пĕтĕм государствăн политикине чи паха пулса тăракан ыйтусем çавра пуçтарат. Суйлав кампанийĕ хăйĕн кулленхи, йаланхи ĕçне туса пыракан кашни çынна çĕклентерет, ăна çÿлерехе тăракан тăват. Вăл кашни районри çынна, вăл çынăн пуçмимине хĕрÿлĕрех, вăйлăрах ĕçлеттерет. **(Алă çупассĕ).**

Кашнийех хăйне хăй—епĕ районри çын мар, епĕ революци çарăн бойецĕ, тесе шутлат. Вăл çак вăхăтра аслă Совет Сойузĕн пĕтĕм халăхĕпе уйрăмах çирĕп çыхăнса тăнине туйат. **(Тăвăллăн алă çупассĕ).**

Есĕр хăвăрах пĕлетĕр: организаци—вăл пит паха йапала. Пирĕн большевиксен партийĕ хăйĕн организацилĕхĕпе çĕнтерчĕ. Иртнĕ çулсенче çак Выборг районĕнчех мĕнле пулнине астăватăр-и? Пирĕн оратăрсем хăш чухне меншевиксен оратăрĕсенчен кăшт вăйсăртарах та пулаччĕç. Интеллигенци пирĕн хушăра çукпа пĕрех пулнă. Мĕн тăвас-ха! Анчах меншевикла оратора арпаштарса йама, пĕтĕм вăйа пĕр çĕре пуçса организацилĕ йĕркепе çапма епĕр йаланах пултарнă,—епĕр йаланах çавăн пек майпа ĕç тунă, ку тĕлĕшпе епĕр йаланах малта пулнă. **(Алă çупассĕ).** Пирĕн парти организаторсене чылайах нумай пăхса ÿстерчĕ. Акă есĕр те, кунта ларакансем,—сирĕн организаторла ăс тата сирĕн организаторла пултарулăх партийе пула пухăннă. **(Алă, çупассĕ).**

Оборонă ыйтăвĕсем патне таврăнпăр. Йулашки империалисăмла вăрçăн масштабĕсене астуса илсен, малашнехи вăхăтра пулма пултаракан вăрçăн масштабĕсем нумай пысăкрах пулассĕ. Епĕр çавна капиталисăмла çĕршывсенче вăрçа хатĕрленнинчен куратпăр. Кунта организацилĕх мĕнре палăрмала-ха? Вăл çакăнта палăрмала — пойăссем фронт патне, сехет механисăмĕ мĕнле тĕрĕс ĕçлет, çавăн пекех вăхăтра пырса тăччĕр: фронт илсе тăрас снарйадсем пĕтĕмпех çав снарйадсемпе пĕрле йаракан аттестатра каланă пек пулччĕр; кашни вăхăтра фронта мĕн кирлине тыл туйса тăтăр, ăнлантăр; сăмахран, кĕтмен çĕртен сывлăшран тапăнсан, çынсем йĕркерен ан тухчĕр; çавăн пек тапăнни хыççăн тепĕр минутран çĕнĕрен те çĕнĕрен организацилĕх пултăр; йалхуçалăхĕ, работниксен хисепĕ сахалрах йулнă пулин те, ĕçсене унччченхи вăхăтри пекех вăйлăн туса пытăр; промышленнăç хăйĕн ĕç пултарулăхне тата темиçе хут ÿстертĕр. Çавсене простой физически вăйпа, трукăх сиксе тăнипе тата çĕклĕнÿлĕ хавасланхпах та туса хума çук. Социалисăмла хăватлă организацилĕх пулсан çавсем пурте пулĕç.

Çавăн пек организаци вăл, маннă кĕрпи пек, турă ырлăхĕ пек, пĕлĕт çинчен ÿкмест. **(Кулаççĕ).** Çук. Ăна тăвас пулат, ăна тăвассишĕн кĕрешес пулат, ăна куллен кун малала йарса, лайăхлатса пырас пулат. Хамăра çак организацилĕхе хăнăхтарса пырас пулат. Массăсем çине йертсе пыма шанчăк хупă çынсем, çав çынсем кирлĕ вăхăтра массăсен вăйне кирлĕ пек, социалисăмла государствăшăн усăлă валеçме пĕлччĕр.

Ку вăл пысăк задачă. Манăн çакна калас пулат: суйлав кампанийĕ ку тĕлĕшпе массăсене организациленме пулăшат, массăсене хăйсене те организацилĕхе вĕрентет, массăсене хăйсене те организацилĕхе хăнăхтарат. Суйлав кампанийĕ пысăк массăсене курма тата çак массăсене палла çулпа илсе пыма вĕрентет. **(Алă çупассĕ).** Есĕр, йулташсем, çакăн çинчен тĕплĕн шухăшласа пăхсассăн, суйлав кампанийĕ, миллионшар, суйлав миллионшар çынсем хутшăнакан суйлав кампанийĕ, çав тери пысăк ĕç пулса тăнине, пирĕн çак ĕçе чи лайăххăн туса иртермелле йĕланса илетĕр.

Хăшпĕрисем ыйту параççĕ: „Мĕнех вара, епĕ сасăлама пыратăп, анчах пурĕ те пĕр кандидат çеç уйарнăçке, вăл пулĕ „суйлани"?—тессĕ. Апла шухăшлакан—йăпăш, пысăк йăпăш.

Капиталисăмла çĕршывсенче те суйлав чухне пĕр çыншăн сасăланисем пулаççĕ. Унта ун пекки вăл йаланах инсетри вырăнсенче, дворйансен йăхĕнчи выборщиксем пурĕ те 50 çын çеç тата тепĕр лорд пур çĕрте пулат,—ун пек çĕрте вара çав лорда „суйлаççĕ" те. Пирĕн çĕршывра чылай çĕрте кандидатсем, пĕр кандидат пултăр тесе, сасăланма тăмаççĕ пулсан,—вăл ĕнтĕ çав кандидатсем социаллă йенчен тăванлă пулнăран, вĕсен политикăла тĕллевĕсем пĕр пекрен килет. **(Алă çупаççĕ).** Вуншар çĕршер пин суйлавçăсем тĕплĕн сÿтсейавнă хыççăн пĕр кандидат тăратма килĕшнĕ. Çакă пулат те ĕнтĕ вăл социалисăм палли. Çак паллă—ĕçсынни массисем хушшинче шалти хирĕçÿсем, буржуалă обществăра шалта пулакан хирĕçÿсем пек шалти хирĕçÿсем çуккине, пулас та çуккине кăтартса тăрат. **(Тăвăллăн алă çупассĕ).**

Епĕ сире тÿррипех калатăп: пирĕн суйлавçăсем нумайрахăшĕ хăйсен бÿллетенĕсене урнăсене йарсассăн, фашиссен вожакĕсем нумайĕшĕ çапла шухăшлĕç: „пăхăр-ха, унта çар çеç мар вăйлă, çар хыçĕнче тата хăрушăрах вăй тăрат", тейĕç. **(Тăвăллăн алă çупассĕ).**

Йулташсем,—епĕ ĕнтĕ кун çинчен ĕнерех каларăм, — пирĕн çĕршыври ĕçсыннисем вуншар çул хушши Ленин хыççăн, Сталин хыççăн пычĕç. **(Тăвăллăн алă çупассĕ).** Тата Ленинградăн революцилле пролетариачĕ йаланах малти ретре пычĕ. **(Тăвăллăн оваци тăваççĕ).**

Епĕ, йулташсем, çапла шухăшлатăп: Ленин хулинчи рабочисем Ленин — Сталин йалавĕпе çĕр процĕнчĕпех суйлава тухĕç. **(Нумайччен чарăнмасăр тăвăллăн алă çупаççĕ, „урра" кăшкăраççĕ).** Ĕççыннисен массисем тата ĕççынни массисен авангарчĕ пулса тăракан коммунисла парти çав тери пĕрлĕхлине епĕр пĕтĕм тĕнчене кăтартса парăпăр. Епĕр хамăр сасăланипе çавна пĕтĕм тĕнчене кăтартса парăпăр. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ, сасăсем: „Сывă пултăр аслă Сталинăн соратникĕ Калинин йулташ, урра!").**

„Стройдеталь" трестра ĕçлекенсем Йе. П. Цыганова йулташа саламлаççĕ

МУСКАВРА. „Сойузстройдеталь" трестĕнче ĕçлекен сотрудниксем ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Сойуз Советне депутата суйламали кандидат Йевдокийа Петровна Цыганова йулташ патне çапла çыру йанă:

„Хаклă йулташ Цыганова, Йевдокийа Петровна!

Сире, Йевдокийа Петровна, ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама Канаш Суйлав Округĕ тăрăх кандидата регистрацилени çинчен пĕлнĕ хыççăн „Стройдеталь" трестра ĕçлекенсен коллективĕ пирĕн комбинатри чи лайăх стахановкăна, хĕрÿлĕн саламлат.

Есĕр, Йевдокийа Петровна, пирĕн парти пулашса пынипе, Иосиф Виссарионович Сталин йулташ йертсе пынипе, хресчен хĕрĕнчен чи лайăх стахановка, Куславкка комбиначĕн лайăх маçтăрĕ пулса тăтăр.

Пирĕн парти çапла тăрăшнипе кăна, пирĕн çĕршывра çеç Ленин Сталин партийĕн ĕçне мĕн пур вăйхалпе хурçа ĕçлекен çынсем вĕçемсĕр ÿсме пултараççĕ.

Есĕр—цехăн чи лайăх стахановки, ĕçре ÿсрĕр, смена маçтăрĕ пултăр. Сирĕн смена производствăла ĕçсене туса пырас тĕлĕшпе мала тухса пырат. Сирĕн сменă—пĕтĕмĕшпех стахановла сменă. Епĕр ун çинчен лайăх пĕлетпĕр.

Есĕр хăвăрăн пĕлÿлĕхе ÿстерессишĕн тăрăшнине те, социалисăмла ĕçĕн маçтăрĕсен курсне вĕрнме çÿренине те епĕр аван пĕлетпĕр. Вăл курсран Есĕр „отлично" паллăпа вĕренсе тухасса шанатпăр.

Епĕр Сире чĕререн, пысăк хавасланхпа саламлатпăр. Канаш Суйлав округĕнчи суйлавçăсем сирĕншĕн сасăлассине шанатпăр, суйлавçăсем Сире шаннине есĕр парти ĕçне пĕтĕм вăйхалтан туса пынипе тивĕçлĕ пулăр, Маркс—Енгĕлс—Ленин—Сталин йалавне тата çÿлерех çĕклĕр.

Сывă пултăр коммуниссен партийĕ!

Сывă пултăр пирĕн тăван, йуратнă йулташ Сталин!

„Стройдеталь" трестри коллектив пухувĕ хушнипе — Выранти Комитет председателĕ Комаров".

* *

Тата çакăн пек çыру „Стройдеталь" трестра ĕçлекенсен перлешÿлĕ пухувĕ Цыганова Йевдокийа Петровнана Аслă Совета депутата суйлама кандидата тăратнипе саванса, Цыганова йулташа саламласа Куславкка комбинатĕнчи рабочисем, служăщчисем тата инженерла-техникла работниксем патне çыру йанă.

Вăрнар суйлав участкинче

Вăрнар суйлав участкинче ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли куна хатĕрленес тĕлĕшпе хĕрÿлĕ ĕç пырат. Парти райкомĕ уйарса çирĕплетнĕ агитаторсемпе вулавçăсем тата пропагандиссем, пĕтĕмпе 40 çын, суйлавçăсем хушшинче агитацилле тата пропагандăла ĕçе йеркеленĕ. Пурĕ 16 кружокра 250 суйлавçă суйлав саккунне вĕренеççĕ. Ачалă хĕрарăмсемпе вата çынсене килĕсенче пĕчченшерĕн, йе пĕр киле икĕ виçĕ çемйе пухса вĕрентеççĕ, ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнă—Пумпур, Чкалов тата Краснов йулташсен биографийĕсемпе паллаштараççĕ, вĕсен ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа параççĕ. Кунта радиопа та усă курма тăрăшаççĕ. Суйлав участкин председателĕ Цветков йулташ 4 хутчен радио тăрăх суйлав саккунĕ çинчен, суйлав участки мĕнле вырăнта пулни тата участкăна хăш урамсемпе çуртсем кĕни çинчен, суйлав хăш кун, сасăласси миçе сехет хушши пыни çинчен, суйлавçă мĕнле йĕркепе сасăлани çинчен доклад туса панă. Çакăнпа пĕрлех ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнă кандидатсен—П. И. Пумпур, В. П. Чкалов, тата А. М. Краснов йулташсен биографийĕсемпе вĕсен пултарулă ĕçĕсем çинчен радио тăрăх доклад туса панă.

Кашни урамра (пĕтĕмпе 6 урам) стена хаçачĕсем кăларма хатĕрленеççĕ.

Суйлав иртерме вăтам шкул çуртне йышăннă. Шкулăн виçĕ класĕнче 9 пÿлĕм пулат. Пÿлĕмсем валли 27 шчит туса хатĕрленĕ. Кашни пÿлĕмрех пĕрер чÿрече, сĕтел, пукан, чернил, перопа ручкă пулаççĕ, вĕсем хатĕр. Суйлав кунĕ суйлавçăсем хăйсен вăхăтне культуралă иртереççĕ. Вĕсем валли икĕ зал уйарнă. Пĕринче—шашкăшахмат вăййисем, хаçат-журналсем, радио, кĕнекесем т. ыт. те пулаççĕ, тепринче—физкультурă, хор кружокĕсем тата струнлă оркестр, кашнийех виçшер хутчен выльаса кăтартаççĕ. Çак кружоксем халĕ тимлĕн хатĕрленме тытăннă.

Нумай çула çитнĕ суйлавçăсене суйлав çуртне илсе пыма, суйлава хутшăнсан киле леçме 5 лав уйарнă. 3 çула çитиччĕнхи 50 ача валли детплощадка пулат.

Халĕ кашни урамрах суйлавçăсен пухувĕсем пулса иртеççĕ. Вĕсем суйлав кунне хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен тимлĕн тишкерсе, суйлав участкине ĕçре пулăшса пыраççĕ, ăнланса илеймен ыйтусене ыйтса пĕлеççĕ. Нойаберĕн 23-мĕшĕнче пĕрремĕш пуху пулса иртнĕ. Вăл пухува 60 суйлавçă пухăннă. Вĕсем 10 ватă çынсене суйлавçăсен спискине кĕртменнине кăтартнă.

Капиталисăмла йĕри-тавралăх тата тĕн

Партин XVII-мĕш сйесĕнче Сталин йулташ пире капиталисăмла йĕри-тавралăхăн контрреволюцилле ролĕ çинчен асăрхаттарнă. „Йуратĕ-ха,—тесе ыйтнă Сталин йулташ,—епĕр економикăра капиталисăм йулашкисене йăлтах пĕтерсе тĕмĕр тесе калама? Çук, çакна калама çук. Кунтан та питрех—епĕр капиталисăм йулашкисене çынсен ăстăнĕнче пĕтернĕ тесе калама çук. Çакна çынсен ăстăнĕ хăйĕн аталанăвĕнче вĕсен економикăлă пурнăçĕнчен кайа йулса пынă пирки анчах та мар, тата капиталисăмла йĕри-тавралăх пирки те калама çук, çав капиталисăмла йĕри-тавралăх ССР Сойузĕн економикинче те, çынсен ăстăнĕнче те капиталисăм йулашкисене çĕнĕрен чĕртсе йама, тытăнса тăма пулăшса пыма тăрăшат, çакна хирĕç пирĕн, большевиксен, тарă йаланах типĕ тытмала".

Йапони—Германи—фашисла шпионсен, диверсанчĕсен процесĕсем ССР Сойузĕнчи ĕççыннисене клас тăшманĕ хăйĕн хĕçпăшалне пăрахманнине пит тухăççăн кăтартса пачĕç. Совет Сойузне хупăрласа тăракан капиталисăмла государствăсем, чи малтан—фашисла государствăсем социалисăм çĕршывĕнчи çапса аркатнă çĕмĕрсе тăкнă експлоататăрла классен йулашкисемпе пĕрлешме, социалисăм строителствине чарма, маларах килсен ăна пĕтерсе хума пĕтĕм вăйа хураççĕ.

Ку тĕлĕшпе капиталисăмла йĕри-тавралăх тĕн тата тĕн организацисемпе вăйлăн усă курат.

Капиталисăмла пур çĕршывсенче те тĕне експлоататăрсем шутсăр хытă хÿтĕлеççĕ, уншăн тăрăшаççĕ. Ку ăнсăртран пулакан ĕç мар.

Капиталиссемпе çĕрулпучĕсене те рабочисемпе хресченсен революцилле йухăмне хирĕç кĕрешме кирлĕ. Йутçĕршывсенче халĕ те, рабочисем капиталиссенчен лайăхрах ĕç услови пама ыйтсан, пуп таврашсем: хуçасене хирĕç тăмала мар тесе вĕрентеççĕ.

1926 çулти май уйăхĕнче Англири рабочисем ĕçе пăрахса, капиталиссем умне услови лартнă: ĕçкунне чакармасан, ĕç укçине ÿстермесен, епĕр ĕçлеме тытăнмастпăр тенĕ. Чиркÿ представителĕсем рабочисене ĕçе тухма, капиталиссемпе килĕшме чĕннĕ.

Ытти çĕршывсенче те çакăн пекех. Рабочисем хăйсен пурнăçне лайăхлатассишĕн кĕрешме тытăнсанах чиркÿ пырса тухат: пуп таврашсем рабочисене турă йачĕпе ÿкĕтлеме тытăнаççĕ, кĕрешĕве пăрахăç тума, вĕсене капиталиссем мĕн панипе çырлахма, капиталиссемпе килĕшме чĕнеççĕ. Паллах, тĕн ĕççыннисен массисене мар, капиталиссен пĕчĕк ушкăнне кирлĕ. Тĕн вĕсене ĕççыннисене пусмăрта тытма кирлĕ.

Çĕр çинче темиçе пин националнăçсем пурăнаççĕ.

Експлоататăрсемшĕн ĕççыннисем капиталисăма хирĕçме пултарайманни çăвă, мĕншĕн тесен, кун пек чухне вĕсене ĕççыннисене пусмăрлама çăмăл. Акă мĕншĕн ĕнтĕ експлоататăрсем йаланах нацилле тата тĕн хирĕçÿне чĕртсе йанă тăрăх ĕççыннисен вăйĕсене ваклама тăрăшаççĕ. Патша правителстви çапла тунă та. Вăл вырăссене— йеврейсем, поляксем, грузинсем, армйансем çине вĕçлетсе йанă, вĕсене курайми тунă. Патша правителстви йеврей, армйан, грузин халăхĕсене хирĕç погромсем тунă. Çак майпа патша правителстви ĕççыннисене патшана, помещиксене, капиталиссене хирĕç кĕрешессинчен пăрнă.

Патша правителстви вăхăтĕнче Росçийăра пулнă ĕçсем халĕ çаплипех буржуалă пур çĕршывсенче те пулса пыраççĕ. Сăмахран, Англи буржуазийĕ темиçе çĕр çул кайала пуйан çĕршыва—Индийе туртса илнĕ, ăна вăл халĕ те хăй аллинче сăнчăрпа тытса тăрат. Англире 45 мĕлйун халăх, Индире 310 мĕлйун. Çакăн пек нумай мĕлйунлă халăха Англи буржуазийĕ мĕнле майпа тытса тăратха? Англи буржуазийĕ Индире пысăк çар тытат. Анчах ку çителĕксĕр. Çавăнпа та вăл Индире будда тĕнне тытакан халăха мусульман тĕнне тытакан халăха хирĕç тăратнă. Англи полицийĕ тĕрлĕ чийелĕхпе çак хирĕçĕве çапăçусем, хĕçпăшаллă çапăçусем патнех çитерет. Çавăнпа та Индири ĕççыннисем пĕр-пĕринпе хирĕçеççĕ, тĕн—тăшманпа, Англи капиталисăмĕпе кĕрешессинчен, пăрат.

Наци тата тĕн хирĕçĕвĕ вăл — експлоататăрсемшĕн хăйсем пуç пулса тăрассине сыхласа усрамали май. Акă мĕншĕн ĕнтĕ капиталисăмла пур çĕршывсенче те тĕне буржуазипе помещиксем пулăшаççĕ.

Халĕ империалисăм саманинче, класлă кĕрешÿ питĕ çивĕчленсе пынă саманара, вилĕм патĕнче тăракан выçлăх империалиссем тĕнре хăйсене çăлăнăç кураççĕ. Капиталисăмла пур çĕршывсенче те государствă организацийĕсемпе чиркÿ организацийĕсем пĕрлешесси пулса пырат. Италири фашисăм Рим паппипе 1929 çултах килĕшÿ тунă. Çакнашкал килĕшÿсене Германире те, Польшăра та, Австрире те, Румынире те тата ытти çĕршывсенче те тунă.

Çак договорсем тăрăх, тĕнпе чиркÿ организацийĕсем капиталисăм çĕршывĕсенче буржуазин государствă аппарачĕн уйрăлми пайĕ пулса тăраççĕ. Пур çĕрте те материалисăмла чăн-чăн ăслăлăха хĕсеççĕ.

Çамрăксене воспитани парас ĕçе пур çĕршывсенче те пупсен аллине панă. Шкулсенче „закон божине" вĕрентеççĕ. Нумайах та пулмасть ,Америкăра халăх учителне, Джон Скоса, ăна ăслăлăх (дарвинисăм) çын пуçланса кайни çине мĕнле пăхни çинчен вĕрентекенсене каласа панăшăн тĕрмене хупса лартмала суд тунă.

Фашисăм вăл буржуазин реакцилле спйĕн терорла диктатурин формĕ. Вăл ĕççыннисем çине наступлени туса пынă чухне тĕнпе тата тĕн организацисемпе вăйлăн усă курат. Буржуалă çĕршывсенче чиркÿ организацисем уççăнах фашисла ушкăнсемпе пĕрлешеççĕ.

Германире Гитлер тата унăн хыççăн пыракансем хăйсен фашисла чиркÿне тăвассишĕн темĕн те тăваççĕ. Фашисăм пулăшнипе çĕнĕ тĕн культне—вата ĕмĕрсенчи тĕшмĕш Вотан турă тĕнне тума хăтланса пăхнă. Анчах та, çĕнĕ тĕн Германире католик тата протестант тĕнне тытакансем кăмăлламаннине пула, фашисăм христиан тĕнĕ çине тайăнат.

Буржуалă çĕршывсенче ăслăлăх хĕсĕкре тăрат. Германире ăслăлăхăн чи лайăх представителĕсене хĕсĕрлеççĕ. Çак йулашки çулсенче пин çурă ытла учонăй Германирен тухса тарнă. Ăслăлăх вырăнне фашисла шкулсенче, университетсенче, тĕн кĕнекисенче, илемлĕ литературăра варвăрствăла мракобеси идейине сараççĕ. Медицинă журналĕсене чиртен лайăх емеллемели молитвăсемпе молебĕнсем, чи лайăх хирург—турă тесе çырса тултараççĕ. Германире врачсен хисепĕ чакса пынă вăхăтра, йумăççем нумайланса пыраççĕ. Пĕр Берлин хулинче кăна 6 пин йумăç.

Капиталисăмла çĕршывсенче тĕн тата тĕн организацийĕсем капиталиссемпе фашиссен аллинче халăха улталамали идеологиле вăй пулат. Тĕн пулăшнипе реакцилле империалисăмла вăйсем ĕççыннисен революцилле йухăмне, халăх фрончĕн политикине хирĕç, социалисăм çĕршывне хирĕç кĕрешеççĕ. Кунта чи малтан католик чиркĕвĕпе Римри папă Пий XI революцилле йухăма хирĕç кĕрешес ĕçре малти ретре пынине кăтартмала.

Римри папă—Совет Сойузĕн чи усал тăшманĕ. Вăл 1929 çулта большевиксене хирĕç, Совет çĕршывне хирĕç „Крестовой поход" организацилеме хăтланнă. Çак поход пирки питĕ хытă шавланă пулсан та, вăл кĕл пек арканса кайнă. Анчах та Совет Сойузĕ çак таса папăна канлĕх памасть. Вăл халĕ те коммунисăма хирĕç, большевиксене хирĕç вăрçă пуçласси çинчен ĕмĕтленет.

Римри папă фашисăма хирĕç кĕрешекен халăхăн пĕрлĕх фронтне хирĕç тăрат. Римри папă Испанири фашисла пăлхавçăсем йенче, хăйĕн ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен Испани халăхне хирĕç тăрат. Вăл темиçе хутчен те Испанири пăлхавçăсен делегацисене йышăннă.

Испанири чиркÿсемпе монастырсем пăлхавçăсен штабĕсем пулса тăраççĕ. Испанири католик пупĕсем фашиссен разведкисенче ĕçлеççĕ. Тĕн тата тĕн организацийĕсем империалисăмла çĕнĕ вăрçă вутне чĕртсе йарасшăн активлăн ĕçлеççĕ. Итали фашисăмĕ вăйсăр Абиссини халăхне хирĕç вăрçнă чухне Ватикан (Римри папă пурăнакан çурт) фашиссене укçа-тенкĕ парса пулăшнă.

Йапони генералĕсене Китай халăхне хирĕç пыракан вăрçăра будда духовенстви активлă пулăшат. Будда пупĕсем Китай çĕршывне туртса илес ĕçре Йапони военщинин малта пыракан отрйачĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсем Йапони генеральнăй штабĕн разведкисем пулса ĕçлеççĕ.

Совет Сойузне хирĕç вăрçă пуçлас ĕçре капиталисăм çĕршывĕсенчи тĕн организацийĕсем чи малти ретре тăраççĕ. Христоса йуратакан чиркÿсенче рабочисемпе ĕççыннисене массăлăн вĕлерме чĕнеççĕ.

Тĕн организацийĕсем уйрăмах коммунисла йухăма кураймаççĕ. Реакцилле буржуази хăйĕн чиркÿ организацийĕсем çине хăйĕн çĕршывĕнчи коммунисăма хирĕç тата уйрăмах—тĕнчери социалисăмла государствăна—советсен çĕршывне хирĕç кĕрешес ĕçре уйрăмах пысăк задач лартат.

Хăйсен çĕршывĕнчи коммунисла йухăма хирĕç кĕрешнипе пĕрлех, капиталисăмла государствăсенчи тĕн организацийĕсем Совет Сойузне хирĕç кĕрешме пур тĕрлĕ майсемпе те усă кураççĕ. Чиркÿсем урлă тата хаçат-журналсемпе кĕнекесем урлă СССР çинчен халиччен илтмен суйа сăмахсем тата елек сараççĕ. Çакнашкал тискер усал елек сарса, реакцилле чиркÿ çыннисем тĕне ĕненекен рабочисемпе хресченсене Совет Сойузне ĕненми, ун çине шанми туса, çапла майпа вара ССР Сойузĕ çине вăрçăпа тухма фашисăм валли çăмăлрах условисем тăвасшăн.

Темиçе çул кайала йутçĕршывсенчи пасторсем сектантсене Совет Сойузĕнчен капиталисăм çĕршывĕсене куçарасшăн кампани пуçласа йанă. Сектантсенчен пĕркасси йутçĕршывсенчи чиркÿ çыннисен вăлтине çакланнă. Анчах, тепĕр çултан, ССР Сойузĕнчен тухса кайнă сектантсем пурте Совет правителствинчен совет çĕршывне кайала таврăнма ыйтнă, мĕншĕн тесен, вĕсем хăйсем çинче „капиталисăм райĕн" тути-масине тутанса курнă.

Капиталисăмла çĕршывсенчи тĕн организацийĕсем пирĕн çĕршывра хăйсен шанчăклă агентурине тăвас тĕлĕшпе пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеççĕ. Капиталисăмла çĕршывсенче Совет Сойузне сăтăрла ĕçсем тума йама вĕрентекен шкулсем пур. Çав шкулсенче шпионсем, разведчиксем, диверсантсем вĕренеççĕ, вĕсене пирĕн çĕршыва йараççĕ.

Октăбĕр революцин малтанхи кунĕсенчен пуçласах тĕн çыннисемпе сектантсем шургвардейцăсен ретĕнче пулса, рабочисемпе хресченсене тата вĕсен тăван Хĕрлĕ Çарне хирĕç активлăн кĕрешнĕ.

Интервентсене пулăшма чиркÿ çыннисем Çĕпĕрте „турамăш полкисем", „иисус полкисем" тунă. Врангĕл генералпа интервентсене пулăшма сектант-меннонитсем йатарласа „меннонитский полк" тунă. Пансен Польшине хирĕç çапăçнă чухне Украинăра чиркÿ çыннисем разведкăра ĕçленĕ.

Баптиссемпе ытти тĕн организацисем совета хирĕçле ĕç тума капиталисăмла çĕршывсенчен пысăк укçа-тенкĕ илсе тăнă.

Халĕ епĕр хамăр çĕршывра пирĕн пата капиталисла государствăсем йанă шпионсен, диверсантсен, сăтăрçăсен йăвисене кăклатпăр. Çак сăтăрçăсемпе шпионсем хушшинче чиркÿ çыннисем сахал мар. Акă, Атăл тăрăхĕнчи Нимĕçсен республикинче нумай та пулмасть, танцбрудерсене урăхла каласан, „таплакан пичĕшĕ" текен сектă ĕçне тупса палăртнă. Çак сектă ĕлĕк пуп, офицер пулнăскерсем йертсе пынипе Германири фашисла организацисемпе тачă çыхăну тытнă, вĕсем хушнă тăрăх пирĕн çĕршывра сăтăрла ĕç тунă.

Капиталисăмла государствăсем пирĕн çĕршывра çапса аркатнă експлоататăрла классен йулашкисене çаплипех хăварасшăн. Вĕсем совета хирĕçле етемсене рабочи клас диктатурине хирĕç кĕрешме мобилизацилессшĕн пулнă.

Тĕн капиталисăма, фашисăма усăллă ĕç тунипе тăрă шыв çине кăлармала. Çакă вăл ĕççыннисен революцилле сыхлăхне вăйлатат.

Обществӑлӑ организацисемпе ӗҫҫынни обществисем тӑратнӑ кандидатсемшӗн!

Трак районӗнчи суйлав умӗнхи канашлу

Йе. П. Цыганова, В. П. Чкалов, З. А. Андрейева тата П. Д. Краснов кандидатурисемшӗн сасӑлама пулчӗҫ

Нойабӗрӗн 27-мӗшӗ. Трак районӗнчи ӗҫҫыннисем суйлав умӗнхи канашлува пухӑнма пуҫларӗҫ. Урам тӑрӑх пысӑк уйав чухнехи пек халӑх утать.

Кӑнтӑрла иртни икӗ сехет тӗлӗнче канашлу уҫӑлать. Хисеплӗ президиума Сталина суйлав, тенӗ сасӑ илтӗнет. Унтан Сталинӑн чи ҫывӑх соратникӗсене хисеплӗ президиума суйлаҫҫӗ.

Малтанхи сӑмахпа „Партизан" колхозран Е. Димитрийева колхозницӑ тухса калать. Вӑл ӗлӗк чурахра пурӑннине тавҫӑрса илсе, халӑхи хаваслӑ пурнӑҫа танлаштарса калать.

— Ӗҫлеме ҫул уҫӑ. Ӑна Сталин Конституци пачӗ,—тет вӑл.

Трибуна ҫине пӗрин хыҫҫӑн теприн тухать. Кашнин хӑйӗн йуратнӑ Сталин йулташӑн йатне асӑнас килет. Кашни хӑй тӑратнӑ кандидатшӑн сасӑлама, уншӑн тӑма сӑмах парать.

Акӑ трибунӑ ҫине 70 ҫула ҫитнӗ Анастасийа Андрейева колхозницӑ тухать.

— Епӗ,—тет вӑл,—70 ҫула ҫитрӗм. Ӗлӗкхинчен темӗн чул лайӑх пурӑнатӑп. Пӳрт лартрӑм. Тумтир лайӑх тӑхӑнатӑп. Спасибо Сталина! Епӗ ку кандидатсене йурататӑп. Вӗсене халӗ куртӑм та, хамӑн ывӑлпа хӗрӗм пек туйӑнса карӗҫ Епӗ вӗсемшӗн сасӑлатӑп (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).

Канашлура 9 ҫын тухса каларӗҫ. Вӗсем хӑйсен кандидачӗсемшӗн тӑма пулчӗҫ. Унсӑр пуҫне Шупашкар суйлав округӗнчен ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн Сойуз Советне депутата суйлама палӑртнӑ кандидат З. А. Андрейева, Ҫӗрпӳ суйлав округӗнчен ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн Национальнӑҫсен Советне суйлама палӑртнӑ кандидат П. Д. Краснов йулташсем тухса сӑмах каларӗҫ.

Суйлав умӗнхи канашлу районри ӗҫҫыннисене З. А. Андрейева, Йе. П. Цыганова, В. П. Чкалов тата П. Д. Краснов кандидатурисене суйлама чӗнсе резолюци йышӑнчӗ. В. П. Чкалов патне саламлӑ ҫыру йачӗ.

Пухура 700 ҫын ытла пулчӗҫ.

Е. Димитрийева йулташ сӑмахӗ

„Партизан" колхозри колхозницӑ

Йулташсем! Тепӗр 15 кунтан Аслӑ Совета суйлатпӑр. Ӗҫхалӑхӗ Аслӑ Совета суйлама шанчӑклӑ, чи лайӑх, чи хастарлӑ ӗҫлекенсене кандидата палӑртрӗ. Вӗсем йалтах хамӑр хушӑран тухнӑ ывӑлсем, хӗрсем пулаҫҫӗ. Вӗсем Октабӗр хыҫҫӑн ирӗке тухса, ӗҫҫыннисемшӗн ӗҫленине кӑтартрӗҫ.

Чӑваш хӗрарӑмӗ совет аппаратӗнче ӗҫлеме пуҫларӗ. Ӗлӗк пулсан, хӗр ҫуралсан, ӑна усрас, пахас вырӑнне, ылханнӑ. Государствӑ халӗ нумай ҫемйелӗ ҫынсене пособи парса пулӑшать. Ӑҫта-ха ун пек ырлӑх? Кунта вӑл—совет ҫӗршывӗнче анчах.

Сталинла Конституци пур правасене те пачӗ. Ӗҫлетӗн. Вӗренетӗн. Сывлӑх начарлансан канма кайатӑн. Епӗ ку сӑмахсене, ӗлӗк начар ҫын хӗрӗ пулнӑскер, халӗ колхозра ӗҫлесе курорта кайса килнӗ пирки каларӑм.

Аслӑ Совета хамӑршӑн ӗҫлекенсене суйлатпӑр, вӗсемшӗн агитацилетпӗр. Манӑн малтанхи сасӑ В. П. Чкалов, З. А. Андрейева, П. Д. Краснов, Ие. П. Цыганова йулташсемшӗн пулать. Епӗ вӗсемшӗн тӑратап. (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

В. П. Чкалов йулташ патне йанӑ ҫыру

Хаклӑ Валерий Павлович!

Сана, пӗтӗм тӗнчипе паллӑ, пирӗн чаплӑ ҫӗршывӑн йуратакан Геройне, сталинла маршрут тӑрӑх вӗҫсе тухса пирӗн ҫӗршыва мухтава кӑларнӑскере, епӗр, суйлав умӗнхи канашлӑва килнӗ Трак районӗнчи ӗҫҫыннисем, хӗрӳлӗ салам йаратпӑр.

Сталинла ӑмӑрткайӑк, пирӗн йуратнӑ ҫӗршывӑн паттӑр Геройӗ ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн депутачӗ пирӗнтен суйланма килӗшнишӗн епӗр хытӑ савӑнатпӑр.

Декабӗрӗн 12-мӗшӗнче—ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйламали кун, епӗр, Трак районӗнчи ӗҫҫыннисем, пурте пысӑк хаваслӑхпа саншӑн сасалатпӑр, хаклӑ Валерий Павлович!

Сывӑ пултӑр ССР Сойузӗн Аслӑ Советне депутата суйлама тивӗҫлӗ кандидат, аслӑ ҫӗршывӑн Геройӗ, вайлӑ Хӗрлӗ ҫарӑн полковникӗ Валерий Павлович Чкалов!

Сывӑ пултӑр пирӗн ҫӗршыва ҫӗнтерӳрен ҫӗнтерӳ патне илсе пыракан Ленин—Сталин партийӗ!

Сывӑ пултӑр пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисен тусӗ тата ҫулпуҫӗ пирӗн йуратнӑ атте Сталин!

З. А. Андрейева йулташ сӑмахӗ

Йулташсем! Пирӗн суйлав кунӗ—декабӗрӗн 12-мӗшӗ—ҫитесси нумай йулмарӗ. Ку кун Аслӑ Совета суйлама кайатпӑр. Ҫак куна ҫитиччен 1917 ҫулччӗнхи асаплӑха аса илмесӗр иртме май килмест. Кашни ӑна халӗхи пурнӑҫпа танлаштарса пӑхать те, калать: патша Российӗ тӗрме пулнӑ, унта халӑха асаплантарнӑ.

Совет ҫӗршывӗнче халӑхсен тӑванлӑхӗ ҫирӗпленсе пырать. Халӑхсем пӗртан, пӗр правалӑ. Пурте суйлама тата суйланма пултараҫҫӗ. Урӑх ҫӗршывсенче пачах урӑхла. Унта мӗнле те пулсан кашнине суйлав прависӗр хӑварассишӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Негрсене, вӗренмен ҫынсене сасӑ памаҫҫӗ. Рабочисем хӑйсен хватерӗсем ҫук пулсан, каллех суйлав прависӗр йулаҫҫӗ. Унта агитаци те пачах урӑхла: унти агитаци капиталиссемшӗн пырать, капиталиссемшӗн укҫа нумай тӑканать.

Чӑваш республики, патша чухнехипе танлаштарсан, нумай улшӑнчӗ. Хамӑрӑн „промышленнӑҫ, хамӑрӑн фабрик-заводсем пур. Ҫӗмӗрле, Куславкка комбиначӗсем, Канашри вагонсем йусакан завод. Чукунҫул пулать. Шупашкарта ҫӗнӗ фабрик-заводсем лартма тытӑнӗҫ.

Унпа пӗрлех кашни производствӑра ӳсет. Тӗттӗмлӗхре пулнӑ ҫынсем халӗ стахановецсем, ӗҫ паттӑрӗсем пулса тӑчӗҫ. Куславкка комбинатӗнчи Цыганова йулташ, станок умӗнче стахановла ӗҫлет. Унӑн цехӗ те ӗҫ ӳсӗмӗсене стахановла илсе пырать.

Колхозсем пулнӑ май, нумай ҫынсем вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешнӗ ҫӗрте палӑрчӗҫ. Колхозра ӳснӗ ҫынсем государствӑ аппаратӗнче йертсе пыма тытӑнчӗҫ. Государствӑ аппаратӗнче халӑх ывӑл-хӗрӗсем халӑх ӗҫне тӑваҫҫӗ.

Тырпул тухӑҫне хӑпартас тӗлӗшпе пысӑк опыт пулчӗ. Кашни гектартан 25—30 центнер тӗштырӑ туса илетпӗр. Акӑ хӑвӑр районри йалхуҫалӑх выставки. Унта пӑхсан, хӑвӑр районри „Разин" колхоз кӑҫал гектартан 25 центнер тырӑ туса илнӗ. Кам амбарне кӗнӗ вӑл тырӑ? Халӗ вӑл тырӑ колхозниксен амбарне пырса кӗчӗ.

Пуҫламӗш шкулсем 6 хут ытла, вӑтам шкулсем 10 хут нумайланчӗҫ. Кашни районра 7—8 вӑтам шкул. Вӗрен. Шкул алӑкӗ кашни валли уҫӑ тӑрать. Сталинла Конституци кашнине вӗренме, ӗҫлеме, канма права пачӗ. Кашни ҫын канма пултарать: курортсем, санаторисем хатӗр.

Йалхуҫалӑхӗнче машинӑ сасси кӗрлеме пуҫларӗ. Комбайна хамӑр тӑватпӑр, ӑна хамӑр ҫынсем тытса пыма тытӑнчӗҫ. Хамӑрӑн самолотсем ҫинче хамӑрӑн лотчиксем инҫе те, ҫӳле вӗҫеҫҫӗ. Хурҫӑ кайӑк ҫинче тӑван ҫӗршывӑн йуратнӑ ывӑлӗсен, хӗрӗсен илемлӗ те айаккa йанӑракан йурӑ кӗвви сывлӑша чӳхентерсе илтӗнет. Вӑл йурӑ кӗввине епӗр йун тӑкса ҫӗнсе илнӗ. Ӑна тума Ленин кӑтартса пынӑ. Ҫавӑнпа ӑна кашни асӑнать.

Пирӗн ӳсӗмсем татах нумай пулмала пулнӑ. Тӑшмансем нумай кансӗрлерӗҫ. Вӗсем 20 гектар ҫӗр ҫинче колхозсем тума, унта вайлӑ тырпул туса илме май килмест, терӗҫ. Ку ҫӗрӗк шухӑша колхозсем ҫӗмӗрсе тӑкрӗҫ. Буржуалӑ националиссем чӑвашран уйрӑм государствӑ туса, йутҫӗршыв ҫумне ҫыпҫӑнас, тенӗ. Тӑшманӑн ӗмӗчӗ ҫитмерӗ. Чӑваш халӑхӗ тӑшмана кӑкласа пӑрахрӗ, Вӗсен йулашкийӗсем те кулленех пӗтсе пырӗҫ. Тӑшмансене хӗрхенекенсене, вӗсене пулӑшакансене тӗл пулсан, вӑл айӑпланмасӑр пирӗн аларан тухмӗ. Вӗсемпе кӗрешсе пыма чӑваш халӑхӗ ман ҫине шанчӑк хучӗ. ССР Сойузӗн Аслӑ Советне депутата суйлама кандидата палӑртрӗ. Суйлавҫӑсен шанчӑклӑхне шута илсе, мӗн пур пӗлӳлӗхе, мӗн пур пултарулӑха халӑх пурнӑҫне йусама, культурӑлӑхне хӑпартса пыма, Ленин—Сталин парти ӗҫне туса пыма, халӑх тӑшманӗсемпе кӗрешсе пыма сӑмах паратӑп. Ку ӗҫре пулӑшса пыма сирӗнтен те пулӑшу ыйтатӑп. (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ. „Урра" кӑшкӑраҫҫӗ).

П. Д. Краснов йулташ сӑмахӗ

Йулташсем! Трак районӗнчи „Партизан" тата „Малала" колхозсенчи колхозниксемпе колхозницӑсен пухувӗсенче йышӑннӑ постановленисем тӑрӑх, Национальнӑҫсен Советне суйлама Ҫӗрпӳ суйлав округӗнчен манӑн кандидатурӑна тӑратни ҫинчен пӗлтӗм. Ун чухне хамӑн кандидатурӑ ҫинчен питех те таранӑн шухӑшласа пӑхрӑм. Чӑнахах епӗ, чӑваш ачи, нуша курнӑскер, халӗ совет ирӗклӗхӗнче етемлӗхӗн телейлӗ те хаваслӑ пурнӑҫне татах лайӑхлатас, тӑшмансене тӗппипех пӗтерсе пырас вӑхӑтра ӗҫлесе хамӑн пысӑк шанчӑклӑха туйса, Ҫӗрпӳ суйлав округӗ тӑрӑх баллотировкӑна тӑма килӗшӳ патӑм.

Кунта есӗр манӑн пурнӑҫ ҫулӗ ҫинчен калани вӑл йалтах ӗлӗк хӑвӑр чуралӑхран тухассишӗн кӗрешни ҫинчен, тата хӑвӑрӑн халӗ тутӑ та ырӑ пурнӑҫ пуҫланни ҫинчен тавҫӑрса илсе каланине пӗлтерет. Апла пулсан та хамӑн кӗрешӳ ҫулӗ ҫинчен калас килет.

Ӗлӗкхи асаплӑха тавҫӑрса илсе, халӗхи ырлӑхпа танлаштарса пӑхсан, ӗҫхалӑхӗн интересӗшӗн тӑрса, вӗсене валли тата хӑватлӑх, хисеплӗх, мухтавлӑх, телейлӗх кӳрессишӗн кӗрешес вӑй-хал кӗрет.

Шухӑшлатӑп та, чуралӑха ыйханатӑп. Атте пысӑк ҫемйене тӑрантарассишӗн матросра ҫӳрерӗ. Ҫӗрӗ сахал. Ӑна та пулин 10—12 ҫул хушшинче кӑна валеҫнӗ: Хӗрарӑмӗ тата ун чухне ҫӗрсӗр-ха, йатсӑр. Ҫиме раштава та ҫитмест. Ҫакна пула йаланах йӑвӑр ӗҫре пурӑнмала пулчӗ.

Вӗренме Октабӗр ҫул уҫса пачӗ. 1921 ҫулта рабфака вӗренме кӗтӗм. Вӗреннӗ вӑхӑтра комсомол ӗҫе хӑнӑхтарчӗ, кӗрешме ҫул кӑтартрӗ. 1928 ҫулта партине кӗтӗм. Ҫакӑнтан ӗнтӗ ӗҫхалӑх ывӑлӗн шанчӑклӑхӗ палӑрма пуҫларӗ.

Колхоз строителстви йуйан та культурӑлӑ пурӑнма тата вайлӑ тухӑҫлӑ тырпул туса илме кӑвартса пачӗ. Икӗ ача колхозра ӗҫлеҫҫӗ. Аван ӗҫлесе тӗштырӑ нумай илчӗҫ.

Тырпул тухӑҫлӑхне хӑпартма тӗрлӗрен минералӑ ҫимӗҫсемне усӑ куратпӑр. Фекали туртгаратпӑр, торф кӑларатпӑр. Фосфорит сапатпӑр. Ҫакӑн пирки те тырпул тухӑҫлӑхӗ ӳсет. Трактор ӗҫлет. Ҫӗре ҫемҫететпӗр. Ҫакӑн пирки те гектартан 100—120 пӑт тӗштырӑ туса илетпӗр.

Сталинла Конституци тӑрӑх чи демократилӗ суйлав иртет. Конституци тӑрӑх кашни суйлавҫӑ ҫине пысӑк ответлӑх ӳкет. Вӑл хӑй тӑратнӑ кандидатшӑн сасӑлать, уншӑн агитацилет, уншӑн сасӑлама чӗнет. Кашни суйлавҫӑ хӑй тӑратнӑ кандидатӗнчен халӑх ӗҫӗшӗн, парти хушнине пурнӑҫа кӗртессишӗн, етемлӗх телейлӗхӗшӗн тӑма ыйтать. 20 ҫул хушшинче туна ӗҫсене сыхлама, вӗсене никам ҫӗнтерейми тӗреклетсе пыма пултаракан ҫынсемшӗн сасӑлать.

20 ҫул! Нумай мар вӑл. Ҫак хушӑра тӗлӗнмеле ӗҫ турӑмӑр. Умра Шупашкар. 1913 ҫул. Хулара 5.000 ҫын пуранать. Кирпӗчрен хывнӑ 3—4 ҫурт, 3—4 ҫурчӗ икӗ хутлӑ. Халӗ... Хулара 30000 ҫын ытла шутланать. Вӑтам шкулсем, техникумсем, институтсем, заводсем. Хула ҫӗнелет. 4—5 хутлӑ ҫуртсем йышлӑ. Кӗҫех хулана малтанхи паровоз хашлатса килӗ!

Ҫаксене йалтах Октабӗр хыҫҫӑн пирӗн ҫӗршывӑн ывӑл-хӗрӗсем туса пычӗҫ. Парти йертсе пычӗ.

Тӑшмансем пирӗн ҫула, пирӗн телейлӗхе туртса илесшӗн пулчӗҫ. Нумай кансӗрлерӗҫ. Вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре нумай сийен кӳчӗҫ. Тӑшмансене епӗр вӗсене хирӗҫ тӑракансемпе пӗтӗҫсе ҫапса хуҫрӑмӑр. Халӗ тӑшманӑн тымарне йӗрлесе тупса тӗппипех тӑпӑлтарса пыратпӑр.

Тӑшмансемпе кӗрешсе пыма, ӗҫҫыннисен пурнӑҫне татах пуйанлатассишӗн ӗҫлесе пыма, Трак районӗнчи ӗҫҫыннисем, хунӑ шанчӑклӑха кулленхи ӗҫре халӑха кӑтартӑп. Хам ҫине хунӑ шанчӑклӑха ҫирӗп тытса пырӑп. (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ. „Урра" кӑшкӑраҫҫӗ. Сасӑсем: Сывӑ пултӑр Сталин йулташ!)

Комбриг Василий Филипович Герасименко—Житомир йал суйлав округӗ тӑрӑх (Житомир облӑҫӗ) Сойуз Советне депутата суйланма баллотировкӑна тӑнӑ (сулахайра).

Совет Сойузӗн Геройӗ комбриг Виктор Степанович Хользунов Смоленск облӑҫӗнчи Починковски суйлав округӗ тӑрӑх Сойуз Советне депутата суйланма баллотировкӑна тӑнӑ (сылтӑмра).

(Сойузфото)

Финанс ӗҫне мала кӑларар

Парти Обкомӗн IV-мӗш пленумӗ республикӑри финанс ӗҫӗ пирки уйрӑм ыйту лартса сӳтсе-йаврӗ. Финанс ӗҫӗ республикӑра пачах ҫителӗксӗр пырать тесе палӑртрӗ пленум хӑйӗн решенийӗнче.

Финанс—социалисӑмла хуҫалӑхра пит те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Финанс ыйтӑвӗсем тавра клас кӗрешӗвӗ вӑйлӑн пырать. Халӑх тӑшманӗсем—троцкиссем, бухаринцӑсем тата ытти ирсӗрсем, финанс органӗсене кӗрсе вырнаҫнӑскерсем, финанс ӗҫӗнче сӑтӑрла ӗҫсем туса пынӑ.

Халӑх тӑшманӗсем финанс политикине пӑсса халӑх массине партипе совет влаҫне хирӗҫ таратма хӑтланнӑ. Вӗсем укҫа-тенкӗ ӗҫӗнче учотпа отчот ӗҫне йапӑхтарса йарса хӑйсен сӑтӑрла ӗҫӗсене пытарса пыма тӑрӑшнӑ.

Финанс органӗсене йертсе пыракансенчен нумайӗшӗ парти Тӗп комӗн февральпе мартри Пленумӗ йышӑннӑ решенипе Сталин йулташ кӑтартса панисене ӑнланса илмен. Вӗсем клас тӑшманӗсене, бюрократланса кайнӑ етемсене финанс фронтӗнчен тасатса, вӗсен сӑтӑрла ӗҫӗсен йулашкисене пӗтерес тӗлӗшпе кӗрешмен.

Финанс органӗнчи халӑх тӑшманӗсемпе пӑсӑлса кайнӑ етемсем: Чӑваш АССР Финанс халӑх комиссарӗ пулнӑскерсем, Лаврентйевпа Марков, Финанс халӑх комиссариачӗн налог пайӗн заведуйущийӗ Кокарев, Йепреҫ районӗнчи финанс пайӗн заведуйущийӗ пулнӑ Туринге тата ыт. те финанспа налог ӗҫӗнче сӑтӑрла ӗҫсем нумай тунӑ. Анчах та Финанс халӑх комиссариачӗпе унӑн вырӑнти органӗсем ҫакӑнтан ку тарана ҫитсе те тивӗҫлӗ вывӑдсем тӑваймаи. Сӑтӑрла ӗҫсен йулашкисене пӗтерессишӗн чӑннипех ӗҫлеме тытӑнмаи.

Парти Обком пленумӗн решенийӗнче „Финанс органӗсенче тата уйрӑмӑнах суту-илӳре сӑтӑрла ӗҫсен йулашкисене пит те йерипен пӗтерсе пыраҫҫӗ, ӗҫе урӑхлатса ҫӗнетесси пит те йӑвӑрран пырать... Совет, хуҫалӑх тата уйрӑмӑнах суту-илӳ организацисенче чылайӗшӗнче чи кирлӗ дисциплина ҫук, государствӑ интересӗсемшӗн, халӑх интересӗсемшӗн тӑрӑшни ҫук, йӗркесӗрлӗх пысӑк. Суту-илӳ организацисенче растратӑсем, ҫаратусем, тавар тухманнисем тем пекех пысӑк тата ҫавсемпе калама ҫук йапӑх кӗрешеҫҫӗ. Бӳджетпа финанс дисциплинине пӑсаҫҫӗ, отчотпа отчотнӑҫ ҫинчен тухнӑ саккунсене шута хуманни ахалех иртсе кайать" тесе ҫирӗппӗн ҫырса хунӑ.

Ҫакӑншӑн финанс органӗсем тата хуҫалӑх органӗсене йертсе пыракансем айӑплӑ. Вӗсем ҫак пысӑк ӗҫе йалтах бухгалтерсем ҫине тата ыт. кӗҫӗн работниксем ҫине йӑван тараҫҫӗ. Ҫав хушӑрах бухгалтерсем хушшинче халӑх тӑшманӗсем пуррине аса та илмеҫҫӗ. Халӗ халӑх тӑшманӗсем: шургвардейцӑ, офицер, пуп пулнӑ етемсем бухгалтер, економис тата ытти ҫав нашкал ӗҫе вырнаҫса финанс органӗсенче сӑтӑрла ӗҫсем туса пыраҫҫӗ. Ҫакна пире хула советӗнче аслӑ бухгалтер пулнӑ Павлов, Финанс халӑх комиссариатӗнче „ӗҫлене" Матвейев, суту-илӳ банкинче „ӗҫлене" Чернов тата ыттисен сӑтӑрла ӗҫӗсем лайӑх кӑтартса параҫҫӗ. Патшалӑх банки системинче те тӑшмансем сахал мар-ха. Анчах вӗсене палӑртса тымарӗпех тӑпӑлтарса кӑларасси питӗ начар пырать. Банк управляйущин заместителӗ Захаров йулташ тӑшмансене хирӗҫ хайаррӑн кӗрешес вырӑнне вӗсемпе килӗшес ҫул ҫине тӑнӑ.

ПСК(б)П Обкомӗн пленумӗ „финанс органӗсен системинче кадрсем тӗлӗшпе ӗҫ питех те йӗркелӗ маррине, вӑл органсенче, пуринчен ытла финанс халах комиссариачӗпе районсенчи финанс пайӗсен аппаратӗнче, халӑх тӑшманӗсем тата ытти тивӗҫсӗр елементсем ларнине шута илсе, пленум Финанс халӑх комиссариатне тата ПСК(б)П райкомӗсене финанс работникӗсене пурне те тӗрӗслесе тухма тата декабӗрӗн 1-мӗшчен кайа йулмасӑр, практикӑла ӗҫре ӳснӗ, выранта ӗҫлекен ҫынсене куҫарса лартни урлӑ, финанс аппаратне политика тӗлӗшӗнчен тӗрӗсленнӗ, парти ӗҫӗшӗн пӗтӗм чӗререн тӑрӑшса ӗҫлекен ҫынсемпе тӗреклетме тата финанс работникӗсен политикӑла пӗлӗвӗпе ӗҫлӗх квалификацине ӳстерес ӗҫе организацилеме хушать" тесе йышӑннине нумайӗшӗ ӑнланман-ха.

Кадрсем пур. Вӗсене вырӑнтан илсе аслӑрах вырӑнсене куҫарса пымала. Ӗҫлеме илнӗ кадрсене вӗрентмеле. Анчах ҫакна финанс органне йертсе пыракансем ку таранччен туман, халӗ те ку ӗҫ питӗ начар пырать.

Финанспа суту-илӳ ӗҫӗнчи чи усал йапала вӑл — растратӑсемпе ҫаратусем пулать. Финанс тата суту-илӳ системинче социалисӑмла пурлӑха ҫаратакансене хытӑ айӑпламанни—растратасемпе ҫаратусен шутнӗ чакармасть, йалтах урӑхла, ӑна ӳсме пулӑшать. Чӑвашторгри бухгалтер растратӑсен сӑлтавне пирӗн работниксем ӗҫукҫи сахал илнӗ тесе кӑтартма хӑтланнӑ. Ҫак бухгалтер вӑл социалисӑмла пурлӑха ҫаратакансене пулӑшать, вӗсен сӑтӑрла ӗҫӗсене витсе пырать.

Предприйатисемпе учреждениссене йертсе пыракансем хушшинче патшалӑха хирӗҫле туртӑмсем те пур. Предприйати оборотне патшалӑх налогӗпе хурассинчен пытараҫҫӗ, рабочисемпе служӑшчисенчен займшӑн тата тӗрлӗ налогсемшӗн тытса йулнӑ укҫа-тенке хӑйсен кассинче тытаҫҫӗ. Акӑ хӑшпӗр фактсем. Утӑ-улӑм хатӗрлекен Чӑваш кантурӗ патшалӑхран 153 пин тенкӗ, Мильутинри хӑма ҫуракан завод 36 пин тенкӗ, Шупашкарти кирпӗч завочӗ 112 пин тенкӗ, пахча-ҫимӗҫ сойузӗ 89 пин тенкӗ хӑйсен тупӑшӗсене налог хурасран пытарса хӑварнӑ. Кунашкал тӗслӗхсем тата та пур.

Парти обкомӗн пленумӗ хӑйӗн решенийӗнче финанс дисциплинине пӑсакансене хирӗҫ, патшалӑх умӗнчи обйазателствӑсене ӗҫе кӗртессинче патшалӑха хирӗҫле туртӑм палӑртакансене хирӗҫ хайаррӑн кӗрешсе пыма, социалисӑмла харпӑрлӑха ҫаратакансене ҫирӗппӗн айӑплама, йӗркесӗрлӗхе пӗтерме, халӑх хуҫалӑхӗнче пур ҫӗрте те ҫирӗп дисциплинӑпа ответлӑх тума хушать. Ҫакна пурин те ҫине тӑрса пурнӑҫа кӗртмеле, укҫа-тенкӗшӗн кӗрешес ӗҫе вӑйлатмала, декабӗрӗн 12-мӗш тӗлне финанс ӗҫӗнче татӑклӑ улшӑнусем тӑвас пулать.

Финанс ӗҫӗ Шупашкар хулинче мӗнле пырать-ха? Шупашкар хулин 1937 ҫулхи бӳджечӗ 4.564.809 тенкелӗх пулмала. Ҫак бӳджетан тупӑш пайне виҫӗ квартӑл хушшинче 88 процент ҫеҫ тултарнӑ. Коммунальнӑй предприйатисенчен, суту-илӳрен кӗмелли тупӑшсем питӗ начар пуҫтарӑнаҫҫӗ. Задачӑ—бӳджетӑн тупӑш пайне тултарассишӗн пӗтӗм вӑй-хала хурса ӗҫлесси пулать.

Бӳджетӑн расхут пайне тӑхӑр уйӑх хушшинче 71 процент ҫеҫ тултарнӑ. Кунта—пурӑнмали ҫуртйӗрсем тӑвас ӗҫ питӗ начар пырать. Пурӑнмали ҫурт-йерсем тӑвас ӗҫе 455,7 пин тенкӗ укҫа йамала пулнӑ пулсан, ку таранччен 259 пин тенкӗ ҫеҫ усӑ курнӑ. Коммунальнӑй предприйатисен ӗҫне 124 пин тенкӗ хывмала пулнӑ пулсан 45,5 пин тенкӗ ҫеҫ хывнӑ. Хула советӗн сывлӑха сыхлав пайӗ хӑйне панӑ 526,7 пин тенкӗрен 291,9 пин тенкӗ ҫеҫ усӑ курнӑ. Ҫакна пула ачасен йаслисене туса пӗтерсе хута йаресси тытӑнса тӑрать.

Хула советӗн ҫӗрӗҫ пайӗ ку тарана ҫитсе те ветлечебница тума тытӑнман. Шыв пӑрки тума панӑ укҫапа та кирлӗ пек усӑ курайманҫҫӗ. Ку тӗлӗшпе Хула советӗ тата унӑн пайӗсем питӗ начар ӗҫлеҫҫӗ.

Массӑла тӳлевсем тӑрӑх финанс планне мӗнле тултарса пыратпӑр ха? Патшалӑх тупӑшӗсем тӑрӑх тӑваттӑмӗш кварталра Шупашкар хулин 700 пин тенкӗ укҫа пухмала. Республикӑ ку плана нойабӗрӗн 10-мӗш тӗлне 39,7 процент тултарнӑ пулсан, Шупашкар хули нойабӗрӗн 21-мӗш тӗлне те 54 процен анчах тултарнӑ. Массӑлӑ тӳлевсем тӑрӑх та ҫавӑн пекех. Нойабӗрӗн 21-мӗшне 57,2 процент ҫеҫ тултарнӑ. Патшалӑх тупӑшӗсем тӑрӑх та, массӑлӑ тӳлевсем тӑрӑх та плана тултарасси пит те вӑраххӑн пырать Ҫапла, нойабӗрӗн 20-мӗш тӗлне патшалӑх тупӑшӗсем тӑрӑх парӑм 23,437 тенкӗ, массӑла налогсем тӑрӑх 36 пин тенкӗ шутланать.

Ҫакнашкал йапӑх ӗҫе пӗтерес пулать. Саккун панӑ правапа усӑ курмала. Хуҫалӑх работникӗсене, шут ӗҫӗнче ӗҫлекенсене, предприйатипе учрежденисен оборочӗсене патшалӑх налӑгӗпе хурассинчен пытарса хӑварма чармала Патшалӑх укҫа-тенкине тӗрӗс шута илмеле. Оборотран илекен налогсене, рабочисемпе служӑшчисенчен тытса йулнӑ культсбор, тупӑш налогӗсене тата займ укҫисене вӑхӑтра хывмала. Ҫакна Канаш—Шупашкар хушшинчи чукунҫул строителствин управленинче ӗҫлекен пуҫлӑхсем ӑнланман-ха. Вӗсем нойабӗрӗн 1-мӗшне ҫитиччен патшалӑх умӗнче 12 пин тенкӗ парӑма кӗнӗ. Укашкалисене ачашламала мар, саккун хушнӑ тӑрӑх айӑпламала.

Растратӑсемпе ҫаратусене пӗтерес, отчотпа отчотнӑҫ ӗҫне лайӑхлатас ӗҫре обществӑла инспекторсемпе финанс постисем пысӑк выранта тараҫҫӗ. Иртнӗ вӑхӑтра ССР Сойузӗн Финанс халӑх комиссариатӗнчи сӑгӑрҫӑсем обществӑла инспекторсене предприйатисемпе организацисен налог отчочӗсене тӗрӗслеме чарнӑ пулнӑ. Халӗ ҫак сӑгӑрла кӑтартӑва пӑрахӑҫа кӑларнӑ. Обществӑла инспекторсемпе финанс постисен ӗҫӗсене кашни предприйатире, организацире вӑйлатмала.

Йулашки вӑхӑтра пур ҫӗрте те тене пекех Комсодсен ӗҫӗсем вӑйсӑрланчӗҫ. Комсодсенче ӗҫлекен йулташсем хӑйсен задачисем ҫинчен манаҫҫӗ. Вӗсен хӑйсен учрежденисемпе предприйатисене перекет кассипе вӑхӑтра расчот тутарас тӗлӗшпе ӗҫлемеле, займ ҫыранса илнӗ ӗҫҫыннисем хушшинче ӗҫлемеле, кашни ӗҫҫыннине займ ҫырӑнтарса илтермеле, т. ыт. те. Ҫакӑн пекех тата финанс активне—хула совечӗн финас секцин членӗсене, комсод членӗсене, урам комитечӗсенчи активискӑсене, учрежденисемпе предприйатисен бухгалтерӗсене финанс ӗҫне чӑннипех те активлӑн хутшӑнтармала.

Финанс активӗ хулари пӗтӗм ӗҫҫыннисемпе перле ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйлама пысӑк хаваслӑхпа хатӗрленет. ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗн IV мӗш пленумӗ „Финанс ӗҫӗ ҫинчен" йышӑннӑ постановлени пур финанс органӗсене те йӗркесӗрлӗхе, финанспа бӳджет дисциплинине пӑсассине пӗтерме, социалисӑмла пурлӑха ҫаратакансене хирӗҫ хайаррӑн кӗрешме, финанс ӗҫӗнчи работниксене большевикла тӗрӗслеме, тӑшмансемпе пӑсӑлса кайнӑ етемсене финанс органӗнчен кӑларса сирпӗтме хушать. Пирӗн парти Обкомӗн пленумӗ йышӑннӑ решенине пурнӑҫа кӗртессишӗн пӗтӗм вӑйхала хурса ӗҫлесе, кайа йулнӑ участкӑна—финанс ӗҫне мала кӑлармала. Ҫакна тума пирӗн вӑй та, майсем те ҫителӗклӗ.

И. Золотников.

Шăнкăртам районĕнчи суйлав умĕнхи канашлу

ШĂНКĂРТАМ (телефон тăрăх). Нойаберĕн 25-мĕшĕнче хăйсен колхоз представителĕсен тата доверенăйĕсен суйлав умĕнхи канашлăвĕ пулса иртрĕ. Шăнкăртам йалĕ аслă уйăври пек тумланнă. Плошчĕсемпе урамсенче колхозниксемпе учрежденисен çурчĕсем çинче партипе правителствă руководителĕсен сăнĕсем тата хĕрлĕ хăмач çине тăван чĕлхепе çырнă лозунгсем Ленинпа Сталин наци политикне пĕтĕм чĕререн саламлаççĕ, Аслă Совета тăван çĕршывăн чи шанчăклă ывăл-хĕрĕсене, çĕхалăхĕн телейлĕ тĕ савăнăçла пурнăçĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешекен паттăрсене суйлама чĕнеççĕ.

Мĕн пурĕ канашлăва 500 çынна йахан пухăннă. Канашлăва „Марс" колхозран пынă ĕлĕк Донбас шахтăрĕ пулнă, ватă колхозник Валишев йулташ уçса йертсе пычĕ. Чи малтан „Осоавиахим" колхозран килнĕ Хавăтуллин А. йулташ сăмах каларĕ:

— Епĕр канашлăва пухăннă çынсем пит ĕмĕтлĕ та савăнăçлă, хамăрăн аслă органа суйламалли кандидатсене кунта илсе кăна çĕтсе йаватпăр. Декаберĕн 12-мĕшĕнче епĕр пирĕншĕн тăрăшакан, Ленинпа Сталин партине пĕрăннă çынсемшĕн Чкалов, Спасов, Харитонова йулташсемшĕн хамăр сасăсене паратпăр терĕ вăл.

Çавăн пекех „Хирти Пикшик" колхозран Хамдĕйев, „Нариман" колхозран Малуков тата Сейфуллина йулташсем вĕсен колхозсенчи колхозниксем Аслă Совета суйлама Чкалов, Спасов, Харитонова йулташсемпе сасăлама пулни çинчен каларĕç. Тата ытти тухса калаçакан йулташсем те пирĕн çине савăнăçлă пурнăçан хĕвеле çутатса тăни çинчен, большевикла парти йерĕсе пынипе пирĕн çĕршыв улапла çитенÿсем туни çинчен, вĕсем суйлавра Ленинпа Сталин партин аван ывăл-хĕрĕсемшĕн, халăхсен телейлĕ пурнăçĕшĕн паттăрла кĕрешекенсемшĕн хăйсен сассине парасси çинчен каларĕç.

Канашлура Патăйел суйлав округĕ тăрăх Аслă Совета депутата суйлама пăлăртнă Харитонова йулташ пухăннă çынсем питĕ ăшшăн кĕтсе илчĕç.

Харитонова йулташ ун çине Шăнкăртам районĕнчи колхозниксем çав тĕри пысăк шанчăк хунăшăн вĕсене кăмăлтан тав турĕ.

— Ĕлĕк,—тет Харитонова йулташ, хĕрарăмсене çăвар уçса сăмах калама та права пулман, хĕрарăма выльăх вырăнне те хуман. Халĕ хĕрарăм арçынпа танах государствă ĕçĕнче хутшăнса ĕçлет, Сталинла Конституци тăрăх государствă органĕсене суйлама та суйланма та пултарать. Аслă Совета суйлама палăртнă кандидатсем хушшинче манăн йат та пур. Халăх шанниненче хакли маншăн урăх нимĕн те çук, епĕ халăх шаннине пĕтĕм вăйпа хурса тивĕçлипе пурнăçлăп.

Малала Харитонова йулташ ĕçхалăхне савнăçлă пурнăç туса панăшăн аслă çулпуçне Сталин йулташа нумай çулсем пурăнмашкăн сывлăх сунчĕ.

Декаберĕн 12-мĕш кунне политикăна хуçалăх ĕçсене пысăк çитенÿсем тунипе кĕтсе илме чĕнчĕ.

* * *

Канашлу пулса иртнĕ хыççăн митинг пулса иртрĕ. Унта пин çын ытла пулчĕ. Колхозниксем партипе правителстви руководителĕсен йачĕпе тата пур халăхăн та çывăх çын аслă çулпуçĕ Сталин йулташ йачĕпе пĕтĕм чĕререн хĕрÿлĕ лозунгсем каласа хăйсем Парти Тепкомĕпе Сталин йулташа чĕререн параннине кăтартрĕç. Аслă Совета лайăх хатерленсе анаçлă ирттермешкен чĕнсе, митинг районри пур колхозниксем патне те çыру йачĕ.

Ник. Пушкин.

Ишлей районĕнчи суйлав умĕнхи канашлу

ИШЛЕЙ (Хамăр корр.). Лозунгсемпе, плакатсемпе, диаграммасемпе, çулпуçĕсен сан-сăпачĕсемпе илем летне клуб. Нойаберĕн 25-мĕшĕнче çак клуба колхозсенчен, профсойуз организацисенчен уйарна представителсем—пурĕ 323 çын районри суйлав умĕнхи канашлăва пухăнна.

Канашлăва Шупашкар йал суйлав округĕ тăрăх Националнăçсен Советне депутата суйлама кандидата тăратна Сахианова йулташ пына. Сахианова йулташ суйлавçăсем ăна пысăк шанчак хунишĕн тав турĕ. Унтан хăйĕн пурнăçĕпе кĕрешÿ кунĕсем çинчен каласа пачĕ.

— Епĕ Бурйат Монгол наци округĕнче çурална. Ĕлĕк пирĕн халăх, чăваш халăхĕ пекех йавар пусмарта пурăнна, тет вăл. Сахианова йулташ хăйĕн сăмахне çапла пĕтерет:

— Сыва пултăр пирĕн никам çĕнтерейми Совет халăхĕ!

Сыва пултăр коммунисла парти тата унăн çулпуçĕ аслă Сталин!

Çак сăмахсене илтсен, канашлăва пына çынсем вăйлăн алă çупрĕç.

Ун хыççăн трибуна çине „Красное знамя" колхозри колхозник Лебедев йулташ тухрĕ.

— Ĕлекхи вăхăтра пире, чухăн çынсене, çын вырăнне хуман. Кун пек канашлусем çинчен телленмен те. Патша саманинче чухăн çын пулнă пирки веренмесĕр йултам. Совет влаçĕ çеç мана пуйан та културла пурнăç пачĕ.

Епĕ çамраклăх талăха тăрса йултам, тет „Ырашпулăх" колхозри колхозник Стеклов йулташ. 11 çула çитиччен çынсем патĕнче ĕçлене, Мускавра приютра пурăнна. Нумай йах пулмаст хутла сахал пĕлекенсен шкуленчен вĕренсе тухрăм. Пирĕн йалта халĕ хура пÿртсем çук, халĕ колхозла йал пĕтемпех çĕнелсе улшăнчĕ. Епĕр вăйла тырпул туса илтĕмĕр. Колхозниксем 300—400 паг тыра илеççĕ.

Епĕр хамăр кандидатсем çинчен пĕлетпĕр. Йалта 6 комсомолец, вĕсем кандидатсем çинчен суйлавçăсене ăнлантарса параççĕ. Епĕр Сахианова, Андреева, Чкалов йулташсемшĕн сасăлатпăр.

Канашлура 17 çын тухса калаçрĕç. Канашлу Стецкий, Сахианова, Чкалов, Андреева йулташсемшĕн сасăлама чĕнсе, Ишлей районĕнчи суйлавçăсем патне çыру йачĕ.

Архипов, Сергейев.

Пленум решенисене ырларĕç

ЙЕТĔРНЕ. Районри пур колхозенче, предприйатисенче, учрежденисенче, шкулсенче ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн IV пленумĕн решенисене сÿтсе-йаваççĕ.

Нойаберĕн 21-мĕшĕнче хулари комсомол активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн IV пленумĕн решенисене сÿтсе-йаврĕ. Пухура тухса калаçакансем Петров, Андрейев, Токсин, Никитинан ирсĕр ĕçĕсем çинчен çеç мар, райкомолан çитменлехĕсене те вăйлăн критиклерĕç.

Райкомол бÿровĕн членĕ, 3 колхоз театрĕн директоре Соснин йала телешенчен пăсалса кайна. Вăлах театра, артиссен пурнăç условисене йапăхтарса пурăнать.

Горпо председателĕ Иванов халăх тăшманĕсене хÿтелет. Хăйĕн аппаратĕнче Долоилов ес-ера тытса тăрать. Столовойĕнче халăх тăшмане Зайцев поварта ĕçлет. Ăна тăшманла ĕçсем тунăшăн темиçе çĕртен те каларса йанă. Вăл пеçерекен çимĕç ăшĕнчен кнопкăсем, йĕпсем, çÿп-çапсем тухаççĕ. Çапах та Иванов: „Они у меня незаменимые работники, Зайцев является не только хорошим поваром в Чувашии, но и в Союзе. Лучше этого повара я больше не найду", тесе тăшман ĕçне тăвакан Зайцева хÿтĕлесе пурăнать.

Йетĕрнери соцкултурĕ çурчĕн директорĕнче 10 çулаха суд тунă Гаврин ĕçлет. Çавăнпа унта нимӗнле ĕç те çук.

Райкомол секретарĕ Свешников С. ку ĕçсене лайăх пĕлсе тăна пулсан та вĕсене тĕрĕ шыв çине кăларассишĕн тăрăшман.

Комсомол активĕн пухăвĕ ПСК(б) Парти Чăваш Обкомĕн IV-мĕш пленум решенисене ырларĕ. Пленум решенисене ăнлантарма 30 комсомолеца йалсене йама йышăнчĕ.

Мăн-Шемердени „Ленин хушувĕ" колхозра колхозниксемпе колхозницăсен перлешÿллĕ пухăвне 80 колхозник ытла пухăннă.

Пуху парти Чăваш Обкомĕн йулашки пленумĕн решенисене сÿтсе йаврĕ. Пленум решенине сÿтсеявна çĕрте колхозниксем хăйсен колхозĕн çитменлехĕсем çинчен, вĕсемшĕн кам айăпллине тухатуха уççăн каласа пачĕç. Колхоз председателе Марейев колхозниксем шанса пана ĕçе тÿре ĕçлесе пурнăçламаншăн пуху ăна ĕçрен хăтарса, ун вырăнне Игнатйев йулташа суйласа лартрĕ.

Обком пленумĕн решенине колхозниксем ырларĕç.

Мих. Шабров.

Колхоз хĕрĕсем

КУСЛАВККА. Тĕмшер йалĕнчи Енгелс йачĕпе тăракан колхозри Александра Морозова кăçал 335 ĕçкунĕ, Улйана Охонкина 397 ĕçкунĕ тунă. Вĕсем иккĕшĕ те 100-шер пăт ытла тĕштырă илеççĕ. Тырă сутса вĕсем хăйсем валли тумтирсем, çĕвĕ çĕлемели машинă, хаçат-журнал çырăнса илме палăртнă.

Вас. Давыдов.

Тутаркас районĕнчи партактив пухăвĕнчен

Кам пулнă Иванов?

Нойаберĕн 19-мĕшĕнче Тутаркас районĕнчи парти активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху парти Чăваш Обкомĕн IV-мĕш пленумĕн решенийĕсене сÿтсе-йаврĕ. Доклад пĕтсенех райком секретарĕ пулса ĕçленĕ. В. Т. Ивановăн парти политикине хирĕçле ĕçĕсем çинчен ыйтусем пама пуçларĕç. Ыйтусем панă вăхăтрах Иванов ашшĕ Кĕчкей вулăсĕнче, старшина пулса ĕçлени палăрчĕ.

Иванов ашшĕсем „Илйуш кÿллине" тытса тăнă. Ăна революци чухне çеç хресченсем вĕсем аллинчен туртса илнĕ. Пухури çынсене вăл кÿлĕ арендатăрне çирĕп задаток памашни те тĕлĕнтерчĕ. Çакна Иванов В. партирен пытарса пурăннă. Иванов политикă тĕлĕшĕнчен те йăла тĕлĕшĕнчен те пăсăлнăскер. Йалсене тухсан „мĕншĕн Иванов В. хуçалăхĕ халĕ те колхозра мар",—тесе ыйтаççĕ.

Иванов хăйне мухтакан подхалимсене йуратнă. Номĕртен номера „райком тĕрĕс йертсе пынипе, Иванов большевикла йертсе пынипе" тесе çыракан редактора—Лукина вăл: „молодец" тенĕ. „Райком секретарĕ Иванов йулташ чысăшĕн хутла пĕлменлĕхе кĕске срукра пĕтеретпĕр;—тесе калаçакан райçутпай пуçлăхне—Водоватова та Иванов килĕштернĕ.

Иванов парти кăтартнă пек кадрсене пăхса ÿстерес вырăнне администрацилĕ майпа йертсе пынă. „Судить! Посадить"—тесе кăшкăрасси—унăн ĕçĕн тĕп меслечĕ пулнă. Ахаль мар ĕнтĕ кăçал 10 уйăх хушшинче 45 колхоз председателне суд туса тĕрмене хупнă.

Ивановăн кировсĕр ĕçсем питех те пумай. Вăл государствă кăсйине хăйĕн аллине чикме питех те йуратнă вара.

Кашни уйăхра райком пропагандисĕсене тÿлекен ĕçукçинчен хăйне вальли 75-шер тенкĕ тытса йулнă. Çавăн пек унăн 2.100 тенкĕ пухăннă. Çав вăхăтра райком техничкине—Петрова Агафине парткабинетра ĕçленĕшĕн тÿлемесĕр пурăннă.

Иванов 1936 ç. Моркаушра политкружок йертсе пынă. Вăл политкружокра вĕренекенсем халĕ те вĕренсе тухман. Моркаушра троцкиссен йăви пулнă. Иванов вĕсене тăрă шыв çине кăларма шутламан.

Коммуниссене выгăвăрсем сăмсаран пăхса панă.

Алла ал çăвас йăла пухура та лайăх палăрчĕ. Куклинпа Калинин А. актив пухăвĕнче Иванова тÿрре кăларасшăн тем пекех тапаçланчĕç.

Тутаркас райкомĕ массăран уйăрăлса кайнă. Парти Тĕпкомĕ партине илме тивĕç çынсене парти ретне илме ирĕк папи султалăк иртрĕ. Тутаркас райкомĕ ку тарана çитсе те пĕр çына та партине илмен. Паторгсем: Кангин, Калинин, Бочайев, вĕсемех райком членĕсен, ку таранччен те партине илме тивĕçлĕ çын тупайман.

Тутаркас районĕнче Данилов, Григорйева, Волков орденоносецсем ĕçлеççĕ, темĕн чухлĕ стахановецсем, 900 ытла комсомолецсем, 50 сочувствуйушчи тата ытти те. Вĕсем хушшинче нимĕнле ĕç те çук.

Иванов самокритикăна пăчăртаса пынă. Районри хаçат: Иванов Пожеданов двурушнике райкомол членне кĕме пулăшни çинчен çырсан, тепĕр кунах Иванов редактăра кабинета чĕнсе: „ун çинчен демонстрироват" тума кирлĕччи вара сана, тесе йатланă. Çавăн пекех хăйĕн соратникĕ халăх тăшманĕ Петров А. В. çинчен çырсан та редактăрăн „секретар" кабинетне кĕрсе тÿсме тивнĕ.

Иванов районри çĕрйĕркелÿ ĕçĕнчи сăтăрла ĕçсен айăпĕнчен те хăтăлса йулма пултараймасть. Йунка колхозĕнче вильăхсене çÿреме те вырăн хăварман, т. ыт. те. Районра 128 колхозран 21 колхозра анчах пусуçавăрнăшĕ çинчен сÿтсе-йавнă.

***

Парти районри активĕн пухăвĕ хыççăн райком çумĕнчи пуçламĕш парти организаци Иванова партирен кăларса пăрахрĕ.

Вир. Мăтри.

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителстви

Пĕр чарăнмасăр туса пымала

Нойаберĕн 27-мĕшĕ тĕлне 20 километăр тăршшĕ лини хывнă. Лини хывакан бригадăсем 81-мĕш километрти труба патне çитрĕç. Анчах труба çине тăпра тултарса çитермен-ха. Сахалтан та 3 пин кубла метр тăпра тултармала. Кăна пурнăçа кĕртме çак икĕ-виçĕ кун хушшинче Шăхасан, Шăнкăртам тата Тăвайпа Шăмăршă районĕсем ĕç тата туртăм вăйĕ çителĕклĕ организацилени кирлĕ. Хальхи вăхăтра Шăхасан районĕнчен 173 çын, Тăвай районĕнчен 10 çын, Шăмăршă районĕнчен 3 çын çеç ĕçлеççĕ. Шăнкăртам районĕнчен пачах та çук.

Иккĕмĕш участкăра та ĕçсем йерипен пыраççĕ. Çĕрпÿ районĕ йулашки вăхăтра сÿрĕк ĕçлени палăрчĕ.

Сĕнтĕрвăррипе Куславкка районĕсем хăйсен планĕсене тултарнă пулин те, чукунçул çинче ĕçлеме колхозниксене организацилес тĕлĕшпе паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчен 81 çын ĕçлеççĕ. Пур районсем те вĕсем пек ĕçленĕ пулсан, 81-мĕш километрти труба çине тахçанах тăпра тултарса çитермеле, вăхăта сайа йамала мар. Шăхасан, Тăвай, Шăнкăртам районĕсен çине тăрса ĕçлеме тытăнса, лини хывассине пĕр чарăнмасăр илсе пыма майсем туса памала.

Пĕкĕ авакан

ЙЕТĔРНЕ. М. Александров йулташ Исамбайри „Смычка" колхозра 1928 çултанпа тăрать. Вăл пĕкĕ авма ăста. Александров колхозник пĕкĕ авса кăçал колхоза 5.000 тенкĕлĕх тупăш пачĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн колхоз ăна кашни çулах премилет.

Сентей М.

Чуварлейри санатори организацисене

санаторине тĕпрен йусанă тата переоборудовани тунă хыççăн кăçалхи çулăн декаберĕн 1-мĕшĕнче уçăласси çинчен пĕлтерет

Санаторийĕн хăйĕн електростанци, ренген кабинечĕ тата кумыс мастерскойĕ пур.

ДИРЕКЦИ.

3—2

Чуварлейри санаторине квалификацилĕ медсестрасем

тата санатори условийĕсенче физкултурă ĕçне пĕлсе тăракан

КУЛТРАБОТНИК КИРЛĔ

Ĕçукçине 1935 çулхи мартăн 4-мĕшĕнче йышăннă сак·ун тăрăх тÿлеççĕ, тата коммуналă услугă пулать.

3—2 ДИРЕКЦИ.

Националнăçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Чăваш АСС Республикинчи Суйлав Комиççийĕ

ПĔЛТЕРНИ

Националнăçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Чăваш АСС Республикинчи Суйлав Комиççийĕн адресĕ çапла:

Шупашкар хули, Чувашскайа урам, 8-мĕш № çурт (Ĕçтăвакан Тĕп Комитетпа Халăх Комиссарĕсен Совечĕн çурчĕ).

ТЕЛЕФОНСЕМ:

Председателĕн—6—59, 5—31 тата 6—24.
Секретарĕн—5—24 тата 0—02.
Ответлă исполнителсен—0—66 тата 0—55.

Государствă Банкĕн Чăваш Республикинчи кантурне çакнашкал работниксем КИРЛĔ:

Кивçенлĕх инспекторĕсем—3
Ревизор—1
Аслă бухгалтерсем—2
Бухгалтер—1
Машинисткăсем—2

Ĕçукçи Государствă нормированийĕ тăрăх.

Кадрсемпе ĕçлекен Й. Ивановран ыйтса пĕлмеле.

2—1

„РОССНАБФИЛМ" *Чăваш кантурĕ*

кино-театрсенче кăтартма

ÇĔНĔ САСЛĂ ФИЛМ

„КАК БУДЕТ ГОЛОСОВАТЬ ИЗБИРАТЕЛЬ"

тăвата копи кăларнă

РЕЖИССЕР—искусствăн тава тивĕçлĕ çынни С. Йуткевич.

КОМПОЗИТОР—Блок.

Çитес кунсенче татах çĕнĕ филм „Доклад товарища Сталина на Чрезвычайном VIII-м Всесоюзном с'езде" кăларать.

„РОССНАБФИЛЬМ"

2—2

Чăваш АСС Республикин прокуратуринче

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн тăшманĕсене пайан суд тума пуçлаççĕ

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре сăтăр туса пурăннăшăн Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссарĕн заместителĕ — ăратлă выльăх-чĕрлĕх зоотехникĕ пулса ĕçленĕ Матвей Филиппович Спиридонова, Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссариачĕн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç Управленин началникĕ пулса ĕçленĕ Дмитрий Трофимович Павлова, Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссариачĕн Племзаготконторă Управленин началникĕ пулса ĕçленĕ Александр Петрович Шулова, Çĕрĕç халăх комиссариачĕн зоотехникĕ пулнă Василий Иванович Зайкова, Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссариачĕн Ветеринари Управленин началникĕ пулнă Александр Трофимович Михопаркина, Сĕнтĕрвăрри районĕнче ветеринари врачĕ пулнă Константин Иванович Орлова Уголовлă Кодексăн 58-7-мĕшпе 59-11-мĕш статйисем тăрăх айăпламали ĕçе, Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссариачĕн зоотехникĕ пулнă Тимофей Сергейевич Сурикова Уголовлă Кодексăн 58—9-мĕш, 58—10-мĕш статйин I-мĕш пайĕ тата 58-11-мĕш статйисем тăрăх айăпламали ĕçе, Тутаркас районĕнче ветеринари врачĕ пулнă Максим Иванович Семйагина Уголовлă Кодексăн 58-7-мĕш тата 58—10-мĕш статйисен 1-ш пайĕпе айăпламали ĕçе Чăваш АССР прокуратури тĕрĕслесе пĕтернĕ.

Çак етемсем пурте совет государстви çине, колхоз строителстви çине тăшманла пăхса, Çĕрĕç халăх комиссариат систĕмин вырăнсенчи сыпăкĕсенче совета хирĕçле елементсене хăйсем майлă çаварса, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе тата колхоз стройне аркатассине тĕп задачă вырăнне хурса ,сăтăрла ĕç туса пынă.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç Управленийĕнче сăтăрла ĕçе çакăн пек туса пынă: колхозсенче ăратлă выльăхсен тĕрлĕрен йăхĕсене хутăшăнтарса йарса ăратлантарас ĕçе арпаштарса пĕтернĕ, уйрăм ăратсене районсем тăрăх валеçес плана пурнăça кĕртессине аркатса пынă, чирлĕ выльăхсем кÿрсе килнĕ, ăратлă сыснасем тесе ахаль сыснасем илсе килнĕ. Выльăх-чĕрлĕхе вĕлерсе пĕтермели условисем туса хурас тĕллевпе, çав çынсем, выльăх апачĕн йикĕсне çулран çул сахал планланă, вăл план выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмели планран пачах уйăрăлса кайнă.

Çĕрĕç халăх комиссариачĕн Ветеринари Управленийĕ йенĕпе сăтăрçăсем Михопаркин йертсе пынипе хăйĕн умне выльăх-чĕрлĕх шутне сахаллатас, йерекен чирсене йурийех сарса колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх хисепне чакарас, йерекен чирсемпе чирленĕ ăратлă выльăхсене пĕлетăркачах колхозсене валеçсе панипе выльăхсене массăлăн вĕлерсе пĕтерес, час сÿрĕлмен епизотикăлă чирсен кивĕрйăвисене сыхласа усрас, бактериологилĕ лабораторлă ĕçе аркатса йарас, выльăх сырйо продуктисене чирлĕ выльăхсен инфекцине йертес, йерекен хăрушă чирсене выльăхсемпе çынсем хушшинче нумай йăн сармали условисем тăвас задачă лартнă.

Ĕçе пăхса тухма Чăваш АССР Аслă Сучĕн Специалнăй Коллегине панă. Вăл ĕçе уçă суд ларувĕнче нойаберĕн 29-мĕшĕнче Шупашкар хулинче пăхса тухаççĕ. Судра айăплаканпа зашчитниксем те пулаççĕ.

ХРОНИКĂ

Чăваш АСС Республикин Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ П. Ф. Йурйева Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕнчен кăларнă.

— Чăваш АСС Республикин Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ А. М. Никулина Чăваш АССР Сывлăха сыхлав халăх комиссарĕн заместителĕнчен кăларнă.

— Чăваш АСС Республикин Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ Андрей Сергейевич Сергейев йулташа Чăваш АССР вырăнти промышлĕннăç халăх комиссарĕн заместителĕ ĕçĕсенчен хăтармала тунă.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

ССР Сойузĕн Государствă Страхованийĕ

ĔÇÇЫННИСЕН ПУРНĂÇНЕ ИРĔКЛĔ СТРАХЛАССИНЕ ТУСА ПЫРАТЬ

Пурнăça коллективлăн страхлани

пĕр-пĕр инкекрен инвалид пулса йулсан тата кĕтмен çĕртен сарăмсăр вилсе кайсан государствăран укçа илме кашни ĕççынни хăйĕн пурнăçне 500 тенкĕрен пуçласа 5000 тенкĕлĕх таран страхлама пултарать.
Пĕтĕм коллективри çынсенчен 50 процентран кайа мар страхланаççĕ пулсан çеç, коллективлăн страхлама йышăнаççĕ.
Страховкă укçине кашни 1000 тенкĕлĕх страхланăшăн çулталăка 12 тенкĕ пулать.

Пурнăça уйрăмăн страхласси

1000 тенкĕ тата унтан малала кирек мĕн чухлĕ таран та пурнăça уйрăмăн страхлама пулать.

Вилсен тата страхланă срукчен пурăнсан государствăран укçа илме страхлани

Кунашкал страхланă тăрăх Государствă страхованийĕ страхланнă çын йăланлăха инвалид пулса йулсан, йе страхланă срук тухиччен пурăнсан страховкă укçине парать. Страхланнă çын вилсен, страховкă укçине страхланнă çын кама пама хушнă (завешчани тăрăх) çавна параççĕ. Кунашкал йĕркепе 16 çултан пуçласа 60 çулхисем таран страхлаççĕ.
Страховкă укçи кашни 1000 тенкĕлĕх страхланăшăн çулталăка—44 тенкĕ тата ытларах та тÿлемеле пулать. Кунта страхланакан миçе çулхине тата мĕн чухлĕ срукláха страхланине шута илсе хак хураççĕ.

Карек мĕнле сăлтавпа вилсен

Государствăран укçа илме страхланма кашни 1000 тенкелĕх страхланăшăн çулталăка (страхланакан çын миçе çулхине шута илсе)—15 тенкĕрен пуçласа 39 тенкĕ таран страховкă укçи тÿлемеле пулать.

Инкек пулнипе вилсен йе инвалида йулсан

Государствăран укçа илме страхланма çын мĕнле ĕçре ĕçленине кура кашни 1000 тенкĕлĕх страхланăшăн çулталака 2 тенкĕ те 50 пусран пуçласа 15 тенкĕ таран страховкă укçи тÿлемеле пулать.

Тĕрлĕрен справкăсене ССР Сойузĕн пур хулисенче тата районĕсенче хуласенчи тата районсенчи финанс пайĕсем çумĕнчи страховой инспекцисенче ыйтса пĕлме пулать.

Пурнăça страхлас тĕлĕшпе тумали ĕçсене йĕркелеме чĕннĕ тăрăх инспекцисем хăйсен агенчĕсене учрежденисене тата киле йараççĕ.

2—1

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмелли хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 399. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2670. Тираж 13264. 58—92 см. 7—1 п. л.